Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать

1937 ДЕКАБĔР 15 ЙУНКУН 287 (4799)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтавкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур. адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Совет халăхĕ Аслă Совета суйланă пĕрремĕш депутат Иосиф Виссарионович Сталин



Пирĕн партин çĕнтерĕвĕ

Суйлавсем пулса иртрĕç. Суйлавра пур çĕрте те коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ, союзĕ кандидачĕсем çĕнтерчĕç. Пур çĕрте те халăх коммунистсем партире тăман рабочисемпе, хресченсемпе, интеллигенципе пĕрле тăратнă кандидатсемшĕн сасăларĕ. Çакă вăл пĕтĕ пысăк çĕнтерÿ.

Суйлава 2 мĕлйун коммунистсемпе 90 мĕлйун партире тăман суйлавçăсем блок туса тухрĕç. Вĕсем социалисăмăн малашнехи çĕнтерĕвĕсемшĕн, хамăрăн социалисăмла индустрине малашне те тĕреклетсе пырассишĕн, колхоз стройне малала тата та ытларах тĕреклетессишĕн, хĕрарăмсене йаланлăхах ирĕклĕ, тулли правалă тăвассишĕн, хамăрăн ачасене телейлĕ те саванăçлă пурнăç кÿрессишĕн, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăха туслă, телейлĕ, ырă пурнăç парассишĕн, ĕçлев, вĕренÿ, телейлĕ пурнăç прависене пĕтĕм халăх тивлечĕ тăвассишĕн, Ленин—Сталин партийĕшĕн сасăларĕç. Суйлавçăсенчен 95 проценчĕ суйлава хутшăнчĕ. Пирĕн республикăра ку хисеп 97 процент. Коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ, союзĕ çĕнтерчĕ.

Коммунистсемпе партире тăманнисен блок çĕнтерĕвĕ—халăхсен пĕрлĕх фрончĕн блок çĕнтерĕвĕ вăл етем историнче пулман çĕнтерÿ, вăл социалисăм çĕнтерĕвĕ. Анчах çак çĕнтерÿ вăл социалисăм çĕршывĕпе кăна чарăнмасть, вăл коммунисăм çĕнтерĕвĕ пулса пĕтĕм тĕнче талкăшне тухать. 90 мĕлйун патне халăх суйлава тухса пĕтĕм тĕнче умĕнче Совет ĕççынĕсем большевиксен партийĕн политики çĕр çинчи пĕртен пĕр тĕрĕс политикă пулнине кăтартрĕç, вĕсем большевиксен партийĕшĕн тăнине кăтартрĕç. Çакăн хыççăн Германи—Итали—Йапони фашисла правителствисем текех вутпа выльама хăйаймĕç. Хăйас пулсан, Совет халăхĕн вăйхăватне хăйсен çурăмĕсем çинче тÿссе курĕç.

Аслă Совета суйланă депутатсен йачĕсем хушшинче уйрăмах пĕр йат палăрса, çутă хĕвел пек çуталса, пĕтĕм совет халăхне савăнтарса, хĕпĕртеттерсе тăрать, вăл—Сталин йачĕ, 170 мĕлйунлă халăха çĕнтерÿсенчен çĕнтерÿсем патне илсе пыракан, Аслă Октябĕрте Ленинпа пĕрле çĕнтерÿ организаципе, граждан вăрçи çулĕсенче 14 государствă тапанса килнине çĕмĕрсе тăкас ĕçе организацилене, империалисăмпа граждан вăрçисем йухăнтарса хăварнă хуçалăха ура çине тăратса, промышленнăçа та, йалхуçалăхне те тĕнчери малти вырăна кăларса, социалисăм çĕнтерĕвне организациленĕ, çĕнĕ йышши, никам çĕнтереймен Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне организациленĕ çыннăн йачĕ.

Совет халăхĕ Аслă Совета Сталинпа пĕрлех тата, унăн чи çывăх йулташĕсене: Молотов, Калинин, Ворошилов, Каганович, Йежов, Микойан, Литвинов. Жданов, Чубарь, тата ытти йулташсене суйларĕ.

Чăваш халăхĕ хăй йенчен Аслă Совета Андрейева, Спасов, Цыганова, А. Краснов, П. Краснов, Коротков, Пумпур, Стецкий, Иванов, Харитонова, Новиков. Сахйанова, Розанов, Моисейева, Горкин йулташсене, Горкий облаçĕнчи рабочисемпе, хресченсемпе, интеллигенципе пĕрле Чкалов йулташа суйларĕ.

Сталин йулташ халăх суйланă депутатсем мĕнле çынсем пулмалине кăтартса пачĕ. Халăх посланникĕсен пур ĕçре те Ленин пек, Сталин пек ĕçлекен, кĕрешекен çынсем пулмала, вĕсем тăшмансене хăйарран çĕмĕрсе пыракансем, нимĕнле йăвăрлăхсем умĕнче те хăраса тăман, халăх интересĕсене чĕре патне хума пĕлекен, социалисăм çĕршывĕпе совет халăхĕн малашлăхĕшĕн паттăрăн кĕрешекен çынсем пулмала.

Епĕр хамăр йенчен хамăрăн депутатсене çапла калас шăйа—есĕр пур ĕçре те, пур чухне те Ленин пек, Сталин пек пулăр, есĕр йаланах Ленин—Сталин партийĕ, социалисăм çĕнтерĕвне организациленĕ парти кăтартнă пек ĕçлесе пырăр,—мĕншĕн тесен вăл парти нихçан та тĕрĕс çул çинчен пăрăнмасть, ăна шанма пулать, мĕншĕн тесен ăна халăхăн шанчăклă çулпуçĕ Сталин йертсе пырать, мĕншĕн тесен вăл парти пĕтĕм халăха çĕнтерÿлĕн коммунисăм патне илсе пырать,—есĕр халăх мĕн каланине, мĕн шутланине тимлĕн итлĕр—вара сирĕн çул çинче нимĕнле чăрмавсем те пулмĕç, вара есĕр пур йăвăрлăхсене те, халăх пулăшнипе, халăхпа пĕрле, паттăрăн çĕнтерсе пырăр.

Салам пирĕн депутатсене!

58-мĕш № суйлав участкинче

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче 6 сехетре ирпе Мускав хулинчи Ленинский суйлав округĕн 58-мĕш № суйлав участкинче хăйсен суйлав правине пурнăçа кĕртме рабочисем, служащисем, Хĕрлĕ Çар командирĕсем, вĕсен арăмĕсем тата тăван-хурăнташĕсем пынă. Кремĕлри Свердлов йачĕпе тăракан клубăн пысăк илемлĕ залне чечексемпе илемлетнĕ. Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри участкă комиççи членĕсем ларакан сĕтелсем патне пырса бÿллетенсем илеççĕ те пÿлмесенчен пĕрине кĕреççĕ, бÿллетенсене урнăна йараççĕ. Суйлавçăсем хушшинче—Владимир Илйич Ленин пиччĕшĕ—Дмитрий Илйич Ульйанов, Надежда Константиновна Крупскайа пур. Чубарь йулташ арăмĕпе, амăшĕпе тата пĕчĕк ачипе пынă.

Каçалапа 6 сехет те 50 минутра суйлав комиççи пÿлĕмне Сталин, Молотов, Ворошилов, Йежов йулташсем пынă.

Сталин йулташ сĕтел патне пырать. Иосиф Виссарионович комиççи членĕсене сывлăх сунать те конверт тата бÿллетенсем илсе 3-мĕш № пÿлĕме кĕрет, унтан тухса конвертне утнă çĕртех çыпăçтарса урнăна йарать.

Молотов йулташ 5-мĕш № пÿлĕме кайать, Ворошилов йулташ 2-мĕш № пулĕме, Йежов йулташ 4-мĕш № пÿлĕме кайаççĕ.

Сасăсене панă. Сталин Молотовпа, Ворошиловпа, Йежовпа пĕрле клубăн йусанă залне кĕрет, ăна пăхса çаврăнать те тухмали алăк патнелле кайать.

Каçхине 8 сехет те 40 минутра Калинин йулташ пырать. Вăл хăй кăмне ĕнентерекен документа кăтартать, бÿллетенсем илсе 3 мĕш № пÿлĕме кайать..

Партине вĕçĕмсĕр йуратнине кăтартрĕç

ПАТĂРЙЕЛ, декабĕрĕн 14-мĕш (телефон тăрăх). Аслă Совет суйлавĕ Патăрйел суйлав округĕнче питĕ пысăк активлăхпа иртрĕ. Суйлав округĕнче пĕтĕмпе 45 710 суйлавçă. Вĕсенчĕн 97,8 проценчĕ сасăланă.

Йелчĕк районĕнчи Елекей Кимеч, Тăрмăш Карканар участкисенче суйлавçăсем 100 процентпĕлех суйлава тухнă. Типтимесра 254 суйлавçăран 250 суйлавçă сасăланă. Кушка суйлав участкинче 475 суйлавçăран 3 çын çеç суйлава хутшăнмасăр йулнă.

Шăнкăртам районĕнче суйлав уйрăмăнах активлăн иртрĕ. Йăхра Çырми, Ельпус, Кайăлăх йалĕсенчи суйлавçăсем пĕр çын йулмиччĕнех суйлава хутшăннă. Çавăн пекех Шăнкăртамри 7-мĕш суйлав участкинче те.

Аслă Совет суйлавĕ пирĕн ĕç-халăхĕ большевиксен партине пĕр пухăшлă пулнине, Ленин—Сталин партийĕ тавра çирĕп пĕтĕçсе тăнине, телейлĕ те саванăçлă пурнăç туса паракана Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратнине кăтартса пачĕ.

* * *

Ĕнер, декабĕрĕн 13-мĕшĕнче, Округри Суйлав Комиççи суйлав результачĕсене пăхса тухрĕ. Участкăри суйлав комиççисен материалĕсем тăрăх, Патăрйел суйлав округĕ тăрăх ССР Союзĕн Аслă Совечĕн Национальнăçсен Советне депутата Ольга Тихоновна Харитонова йулташ суйланнă.

Н. Пушкин.

Рустов йалĕнчи хресченсен „приговорĕ“

БАКУ (ТАСС). Азербайджан [illegible] Республикин тĕп архив управленийĕнче интереслă документ пур. Çав документран Азербайджанри ĕçхресченĕсем патша вăхăтĕнче государствă думи çинчен мĕнле шухăшлани курăнса тăрать.

Çав документа, йалти сход йышăннă решенийе—„приговора“ тĕнĕскерне Кубински уйесĕнчи IV-мĕш думăна суйлав иртерес тĕлешпе ĕçлене комиççи ĕçĕсем хушшинче тупнă.

„Приговор № 11“.

1912-мĕш çулхи августăн 28-мĕш кунĕ.

Епĕр, [illegible] Рустов йалĕнчи айалта алă пуснă хресченсем, çак кун, рустовски обществăн старшини пур чухне, пурĕ 255 килхуçи йалти схода пухăнса, г. Баку губернаторĕн 1912 çулхи августăн 5-мĕшĕнчи № 3 хушăвĕ тăрăх 10 килхуçирен пĕрер çын участкăренчи сходсен составне, государствă думине суйламалли уполномоченнăйсене кĕме, суйлассисине хамăр хушăра кăмăллакан çук, мĕншĕн тесен епĕр суй аватăпăр, мĕншĕн тесен пире çав вăл кирлĕ мар, çавăн парки ала пусатпăр“.

Çакă интереслă, йалти сходăн решенийе ала пуснă хресченсен хисепĕ „десятидворниксене“ суйламалли правилă хресченсен хисепĕнчен чылай нумайрах пулнă.

Рустов йалĕ—Кубински районри пысăк йалсенчен пĕри. Совет влаçĕ пулнăранпа ку йалăн та сăн-сăначĕ тĕпренех улшăнса çĕнелчĕ, йал ÿсрĕ тата йал хушшине нумай йусанă. Çак йалти хресченсем тăвата колхоза пĕрлешнĕ.

Рустов йалĕнчи хале суйлавçăсем: арçын ем 1.100 çын, хĕрарăмсем 950 çын. Вĕсем суйлав умĕнхи пухура Калинин йачĕпе тăракан ертелри ватă колхозникĕ Арзуман Салим Оглы йулташа хĕрÿлĕ саламланă. 70 çула çитнĕ колхозник Арзуман Салим Оглы митингра çапла каланă:

— Епĕ революци пуличченхи вăхăтри „суйлавсене“ лайăх астăватăп. Унчухнехи вăхăтра выльăхчĕрлĕх нумай усранă çынсем, темиçе батрак тытнă çынсем çеç суйлама тата суйланма пултарнă. Çавнашкал „суйлавсем“ мĕне кирлĕ пулнă-ха. Вĕт унчухне „суйланнисем“ бексемпе хăйсен ырлăхĕшĕн çеç ĕçленĕ.

— Халĕ ĕлĕкхи пек мар. Халĕ пирĕн пурнăça Сталинла Конституци çутатса тăрать. Епĕр, партире тăманнисем, коммунистсемпе пĕрлех, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пурте пысăк хаваслăхпа чи лайăх çынсемшĕн, тăван çĕршывшăн пĕтĕм чĕререн тăракан çынсемшĕн сасăлатпăр.

Çапла каланă суйлав умĕнхи митингра ватă колхозник. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Рустов йалĕнчи суйлавçăсем пурте сасăланă.

Пăрачкав районĕнче

ПĂРАЧКАВ, декабĕрĕн 14-мĕшĕ (телефон тăрăх). Аслă Совет суйлавне Пăрачкав аслă уйаври пе капăрланса тухрĕ. Урамсемпе çуртсене лозунгсемпе, плакатсемпе çулпуçсен тата Аслă Совета депутата суйлама палăртнă кандидатсен сăнĕсемпе илемлетнĕ.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче 6 сехет çитиччĕнех суйлав çуртне суйлавçăсем пухăнма пуçларĕç. Шап 6 сехетре суйлав комиççи ĕçе тытăнчĕ. Пĕрремĕш участкăра чи малтан инвалидсен ертелĕн председателĕ Артамонов коммунис, ун хыççăн „Серп и молот“ колхозри колхозница Пушкова суйлав бÿллетенĕсене илчĕç.

Кĕтмели çуртă пÿлĕмре радио, патефон, биллиард, шашкă-шахматсем, тĕрлĕрен литературă. Ватă суйлавçăсемпе инвалидсене суйлав çуртне лашапа тата автомашинăпа илсе пырса, кайала киле леçрĕç.

Каçхине 12 сехетре участкăри комиççи председателĕ суйлав пĕтни çинчен пĕлтерчĕ те, комиççи сасăсен хисепне шутлама тытăнчĕ. 3.251 суйлавçăран суйлава 3.158 çын йе 97,1 процент хутшăннă. Пĕрремĕш участкăра суйлава 99,4 процент хутшăннă.

Клопов.

Тĕп Суйлав Комиççийĕ ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕн резуљтачĕсем çинчен пĕлтерни

ССР Сойузĕ тăрăх пĕтĕмпе суйлав участкисем 137.185 тата суйлав округĕсем 1.143 (Сойуз Советне суйламали—569 тата Национаљнăçсен Советне суйламали—574). Декабĕрĕн 13-мĕшĕнчи çĕрле 12 сехет тĕлне сасăсене пур округсем тăрăх та пĕтĕмпе шутласа тухса çитермен пулнă-ха. Суйлав округĕсем пĕлтернĕ тăрăх, декабĕрĕн 13-мĕшĕнчи çĕрле 12 сехет тĕлне 1.014 депутат суйланине регистрациленĕ те ĕнтĕ. Çак суйланă депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем.

Туллин шутласа тухнă тăрăх, Мускав хулинче пурĕ 2.739.783 суйлавçăран 2.715.985 суйлавçă сасăланă, вăл 99,13 процент пулат, Мускав облăçĕ тăрăх 2.618.403 суйлавçăран 2.558.158 суйлавçă сасăланă, вăл 98 процент пулат.

Мускав хулипе Мускав облăçĕ тăрăх суйланнă депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем:

Мускав хули

1) И. В. Сталин
2) В. М. Молотов
3) Н. С. Хрушчев
4) Н. А. Булганин
5) И. И. Гудов
6) Г. А. Братановский
7) И. М. Москвин
8) В. Л. Комаров
9) О. Ф. Леонова
10) В. И. Кабанов
11) И. И. Сидоров
12) Т. В. Федорова
13) Н. Н. Бурденко
14) П. Н. Пичугина

Мускав облăçĕ

1) Н. К. Крупская
2) Г. М. Маленков
3) Л. З. Мехлис
4) В. С. Молоков
5) В. С. Сидоров
6) Б. М. Шапошников
7) Н. Т. Маљушин
8) В. С. Минайев
9) П. И. Голубева
10) М. К. Симонженкова
11) И. Д. Артухин
12) В. А. Малышев
13) С. Ф. Реденс
14) М. П. Петров
15) Н. И. Дедиков
16) И. С. Хохлов

Туллин шутласа тухнă тăрăх, Ленинград хулинче 2.333.149 суйлавçăран 2.244.825 суйлавçă сасăланă, вăл 96,3 процент пулат, Ленинград облăçĕ тăрăх 2.021.905 суйлавçăран 1.942.042 суйлавçă сасăланă, вăл 96 процент пулат.

Ленинград хули тата Ленинград облăçĕ тăрăх суйланă депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачесем:

Ленинград хули

1) А. А. Жданов
2) М. И. Калинин
3) А. И. Угаров
4) М. М. Литвинов
5) И. С. Исаков
6) А. Ф. Селезнев
7) И. Т. Тевосйан
8) А. А. Байков
9) А. Ф. Смирнова
10) Н. С. Сметанин
11) А. Н. Петровский
12) Е. П. Корчагина-Александровская.

Ленинград облăçĕ

1) А. Н. Толстой
2) П. Е. Дыбенко
3) Л. М. Заковский
4) А. А. Кузнецов
5) Н. Е. Йегоров
6) М. К. Таппо
7) В. Д. Богданов
8) Н. М. Анцелович
9) И. И. Копец
10) А. Н. Никитин
11) Г. И. Спирков
12) К. И. Душенов
13) П. А. Туркин.

Туллин шутласа тухнă тăрăх, Минск хулинче 174.323 суйлавçăран 173.558 суйлавçă сасăланă, вăл 99,6 процент пулат.

Минск хули тăрăх суйланă депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем:

1) К. Йе. Ворошилов
2) В. Г. Ванейев.

Туллин шутласа тухнă тăрăх, Кийев хулинче 611.615 суйлавçăран 602.830 суйлавçă сасăланă, вăл 98,6 процент пулат.

Кийев хули тăрăх суйланă депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем:

1) С. В. Косиор
2) А. А. Богомолец
3) П. В. Гусйатникова
4) Н. М. Марчак.

Туллин шутласа тухнă тăрăх, Харьков хулинче 541.121 суйлавçăран 534.611 суйлавçă сасăланă, вăл 98,8 процент пулат.

Харьков хули тăрăх суйланă депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем:

1) Л. И. Калиниченко
2) В. Ф. Литвинов
3) Г. Ф. Проскура
4) Н. Ф. Колесник.

Туллин шутласа тухнă тăрăх, Тбилиси хулинче 374.963 суйлавçăран 358 578 суйлавçă сасăланă, вăл 95,6 процент пулат.

Тбилиси хули тăрăх суйланă депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем:

1) Л. П. Берия
2) Э. Н. Мазанашвили
3) М. М. Гвишчиани
4) С. М. Ишханов
5) Д. А. Чичинадзе
6) А. В. Циклаури
7) П. А. Вершков.

Туллин шутласа тухнă тăрăх, Ташкент хулинче 356. 272 суйлавçăран 333. 811 суйлавçă сасăланă, вăл 93,7 процент пулат.

Ташкент хули тăрăх суйланă депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем:

1) Л. М. Кагайнович
2) У. Йусупов
3) М. Йулдашев
4) В. Йа. Емцов
5) М. Абдурахманова.

Туллин шутласа тухнă тăрăх, Баку хулинче 512.545 суйлавçăран 489.298 суйлавçă сасăланă, вăл 95,5 процент пулат.

Баку хули тăрăх суйланă депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем:

1) М. Д. Багиров
2) И. М. Губкин
3) М. А. Йевсейенко
4) Н. О. Куљков
5) Йакубов Мир-Теймур Мир Алекпер Оглы
6) Асланова Чимназ Абдул Али Кизы
7) Бабайев Али Ага Гусейн Кули Оглы
8) С. И. Синайский-Михайлов
9) В. Т. Игнатйев.

ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи.

Шупашкарти улттăмĕш суйлав участкинчи секретар пулĕмĕнче. Хула аптекинчи фармацевт Сократова йулташ хăйне суйлав спискĕ çинче паллă тутарат.

(фото Цыганован).

Стахановла ӳсĕмсем

СĔНТĔРВĂРРИ (хамăр корр.) Хулари предприйатисенчи рабочисем стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхне хутшăнса кунран-кун ӳсĕмсем туса пычĕç. Çĕвĕ çĕлекен ертелри рабочисем суйлав кунне плана ытлашшипех тултарнипе кĕтсе илчĕç. Декабĕрĕн 9-мĕшĕ тĕлне вăл ертелри кĕпе-тумтирсем çĕлекен цех плана 105 процент, матрацсем тăвакан цех 105 процент, çăматă йăвалакан цех 120 проц. хĕрарăмсен тумтирĕсене çĕлекен цех 125 процент, çĕлĕк-картус çĕлекен цех 130 процент тултарчĕ. Ертелре уйрăмăнах Фроловпа Сорокин йулташсем лайăх тĕслĕхсем параççĕ. Вĕсем нормăна 200 процент тултарса ĕçлеççĕ.

В. Василйев.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн Сойуз Советне суйланнă депутатсем

ССР Сойуз Аслă Совечĕн Сойуз Совечĕн суйлавне иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççийĕсем пĕлтернĕ тăрăх, ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем суйланнă.

Шупашкар Суйлав округĕнче 145.942 суйлавçăран 141.176 суйлавçă сасăланă. Округран—
Зойа Ананйевна АНДРЕЙЕВА суйланнă.

Канаш Суйлав округĕнче 134.985 суйлавçăран 131.050 суйлавçă сасăланă. Округран—
Йевдокийа Петровна ЦЫГАНОВА суйланнă.

Улатăр Суйлав округĕнче 136.877 суйлавçăран 132.099 суйлавçă сасăланă. Округран—
Лука Семенович СПАСОВ суйланнă.

Çĕмĕрле Суйлав округĕнче 140.686 суйлавçăран 137.215 суйлавçă сасăланă. Округран—
Андрей Михайлович КРАСНОВ суйланнă.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн Национаљнăçсен Советне суйланнă депутатсем

ССР Сойуз Аслă Совечĕн Национаљнăçсен Совечĕн суйлавне иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комççийĕсем пĕлтернĕ тăрăх, ССР Сойуз Аслă Совечĕн Национаљнăçсен Советне депутата коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем суйланнă.

Шупашкар Суйлав округĕнче 57.558 суйлавçăран 55.685 суйлавçă сасăланă. Округран—
Алексей Иванович СТЕЦКИЙ суйланнă.

Шупашкар йал Суйлав округĕнче 51.314 суйлавçăран 50.041 суйлавçă сасăланă. Округран—
Марийа Михайловна САХЙАНОВА суйланнă.

Çĕрпӳ Суйлав округĕнче 50.512 суйлавçăран 48.984 суйлавçă сасăланă. Округран—
Петр Дмитрийевич КРАСНОВ суйланнă.

Вăрмар Суйлав округĕнче 51 206 суйлавçăран 49 798 суйлавçă сасăланă. Округран—
Герасим Иванович ИВАНОВ суйланнă.

Канаш Суйлав округĕнче 52.311 суйлавçăран 49.873 суйлавçă сасăланă. Округран—
Александр Федорович ГОРКИН суйланнă.

Йĕпреç Суйлав округĕнче 48.888 суйлавçăран 47.364 суйлавçă сасăланă. Округран—
Сергей Ксенофонтович КОРОТКОВ суйланнă.

Патăрйел Суйлав округĕнче 45.710 суйлавçăран 44.707 суйлавçă сасăланă. Округран—
Ољга Тихоновна ХАРИТОНОВА суйланнă.

Улатăр Суйлав оркугĕнче 48.273 суйлавçăран 46.422 суйлавçă сасăланă. Округран—
Тамара Алексейевна МОИСЕЙЕВА суйланнă.

Вăрнар Суйлав округĕнче 51.500 суйлавçăран 50.314 суйлавçă сасăланă. Округран—
Петр Иванович ПУМПУР суйланнă.

Çĕмĕрле Суйлав округĕнче 49.147 суйлавçăран 47. 829 суйлавçă сасăланă. Округран—
Иван Василйевич НОВИКОВ суйланнă.

Йетĕрне Суйлав округĕнче 49.895 суйлавçăран 49 492 суйлавçă сасăланă. Округран—
Алексей Михайлович РОЗАНОВ суйланнă.

Горький Суйлав округĕнчен Валерий Павлович ЧКАЛОВ суйланнă.

— ●★● —

Сталин йулташ сăмахĕ çинчен йутçĕршывсенчи пичет мĕн çырат

Сталин йулташ Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнче суйлав умĕнхи пухура тухса каланă сăмах çинчен йутçĕршывсенчи пичет пит нумай çырат.

Французсен „Тан" йатлă хаçачĕ Сталин йулташ сăмахĕ çинчен тĕплĕн çырса пĕлтернĕ. Сталин йулташ—Совет Сойузĕнче социалисăм ĕнтĕ пурнăçа кĕнĕ, Аслă Совет депутачĕсен хăйсен ĕçĕнче Ленин пек пулма тăрăшмала, тесе кăтартса панине палăртса пичетленĕ.

Лондонри хаçатсем пурте Сталин йулташ сăмах тухса калани çинчен тĕплĕн пĕлтерсе пичетлесе кăларнă. Сталин йулташăн сăмахĕнчи Конституци депутатсен ĕçĕсене массăсем чăннипех контрољ тăвассине пурнăçа кӳртме май парат, тенĕ пайне палăртса пичетлеççĕ.

Йапони хаçачĕсем нумайрахăшĕ Сталин йулташ сăмахĕ çинчен пĕлтерсе пичетленĕ. Хаçатсем — суйлавсен пахалăхĕ çинчен каланине, суйлавçăсемпе депутатсем хушшинче тăтăшах çыхăну пулмала, тенĕ тĕлсене пичетленĕ.

(ТАСС).

Стена хаçат редакторĕсене пулăшу

Тĕне хирĕçле пропагандă

Тĕне хирĕçле пропагандă сарас ĕçре колхозри тата бригадăри стена хаçачĕ пысăк вырăн йышăнса тăрат. Стена хаçачĕн стахановецсем, ударниксем, йалти интеллигенци — учительсем, агрономсем, куљтурă ĕçлекенсем çине тайанса колхозра тата бригадăра тĕне хирĕçле пропагандăна вăйлатса пымала.

Колхозри клуба йе вулав çуртне илĕпĕр. Çак организацисем йалта куљтурă ĕçĕсен центрĕсем пулмала. Колхоз клубĕн йе вулав çурчĕн тĕне хирĕçле ĕçсем тума тĕрлĕ формăсем пур. Колхоз клубĕ йе вулав çурчĕ тĕне хирĕçле пропагандăна мĕнле туса пыни çинчен стена хаçачĕ çине тăтăшах çырмала. Стена хаçачĕ вулав çуртне, йе клуба колхозниксем хушшинче тĕне хирĕçле литературăна вуласа парас ĕçе организацилеме пулăшмала.

Стена хаçачĕн куљтурă организацисене тĕне хирĕçле пропагандă йенне çавăрмала, тĕне хирĕçле ĕçе организацилеме пулăшмала.

Колхозниксене аслăлăхлă-куљтурă ĕçĕн ыйтăвĕсем тăрăх лекци-докладсем туса пани питĕ кирлĕ. Ана колхозниксем питĕ килĕштерессĕ. Ку вăл колхоз клубĕн йе вулав çурчĕн тĕне хирĕçле пропагандă ĕçĕсен формисенчен пĕри пулат. Сирĕн ку тĕлĕшпе çу мĕнле тăрат? Сирĕн патра тĕне хирĕçле докладсемпе лекцисем туса ирттересçĕ-и? Кунта стена хаçачĕн ĕçе пуçарса кайне пулмала.

„Пирĕн тĕне хирĕçле ĕç тума вĕрене ситнĕ квалификацилĕ çын çук" тессĕ, йапăх ĕçлекен клуб тата вулав çурчĕн пуçлăхĕсем. Ку тĕрĕс мар. Ку ĕçлесрен хăтălма сăлтав тупни. Вăл ĕçлемесĕр ларнине, ĕçлеме пултарайманнине тĕрсе кăларма тăни кăна пулат. Стена хаçачĕн çакнашкал сийенлĕ шухăшсене отпор памала. Колхозри клубăн тата вулав çурчĕн задачи хăйĕн лектăрĕсемпе докладчиксем вĕрентсе хатĕрлесси пулат. Çакна тума малтанах йалти куљтурăлă вăйсемпе усă курмала. Агронома, учителе, врача, малта пыракан комбайнера, трактористка, колхозри активиса тĕне хирĕçле литературăпа паллаштарăр, вĕсенчен кашнинех хăйсене çывăх тăракан ыйту тăрăх тĕне хирĕçле лекци вуласа пама пултарат. Сăмахран, учител „Çын мĕнле пуçланса кайни çинчен", „Тенчене турă туна-и?" темăсем тăрăх доклад тума пултарат. Агроном çак темăсем тăрăх: „Çăмăр мĕнтен пулат", „Тĕп хресчен хуçалăхне мĕншĕн сийенлĕ?" темăсем тăрăх доклад тăват. Партин членĕ „Сталинла Конституци тата тĕн", „Тĕн кама усăллă, кама сийенлĕ" тата ытти темăсем тăрăх доклад тума пултарат. Вырăнти куљтурăлă вăйсене çапла усă курсан, колхозри клуб тата вулав çурчĕ тĕне хирĕçле ыйтусем тăрăх лекцисем тăвас ĕçе йĕркелеме пултарат.

Лекцисем-докладсем иртернĕ чухне мĕнле волшебнăй фонар, кино, пăхса курмалли йапаласем питĕ кирлĕ. Хăлĕ пленка тата кантăк çине ӳкернĕ тĕне хирĕçле диапозитивсем нумай. Кунта та стена хаçачĕ çу пуçарма пултарат, çак ыйтăва клуб, вулав çурчĕ, колхоз правлени, парти организаци унпе лартма пултарат.

Тĕне хирĕçле картинăсемпе тĕне хирĕçле докладсемпе лекцисем тунă чухне усă курмала. „Крест и маузер" йатлă кинокартинăна католик чиркĕвĕн класс кĕрешĕвĕ çинчен доклад тунă чухне, „Хозяин черных скал" картинăна манахсен пурнăçĕ çинчен, „Старец Василий Грязнев" картинăна „светуйсен" „хăвачĕ" çинчен лекци вуланă чух не кăтартма пулат. Йалта тĕне хирĕçле пропагандă сарнă чухне усă курма тата чылай кинокартинăсем пур. Çак кинофиљмсене курнă хыççăн колхозниксемпе колхозницăсем картинă çинчен мĕн шухăшланине пуçтарсан, курма пынă çынсен пуçне йулнă шухăш çинчен, вĕсем картинари çынсем çине мĕнле пăхни çинчен стена хаçачĕ çине çырсан питĕ аван пулат.

Хăшпĕр колхозсенчи клубсемпе вулав çурчĕсем художествăлă вечерсем тăвассĕ. Художествăлă вечерсенче драмкружоксем тĕне хирĕçле пĕчĕк пьесăсем лартассĕ, художествăлă произведенисенчен тĕне хирĕçле сыпăксене вуласа параççĕ, хор кружокĕсем тĕне хирĕçле йурăсем йурлаççĕ. Тĕне хирĕçле çакнашкал вечерсене çынсем нумай пуçтарăнаççĕ. Сирĕн колхозри клубра харпăрхăй пултарулăх ĕçĕ анлăн сарăлнă пулсан, драмкружок, музыка, хор кружокĕсем ĕçлесе пулсан, çакнашкал художествăлă вечерсене çăмăллăнах организацилеме пулат.

Пирĕн пултарулă тата талантлă çынсем нумай. Вĕсене харпăрхăй пултарулăх кружокне йавăçтармала, вара ĕç малала хăвăрттăн кайат.

Ĕçĕн интереслĕ форми „Ыйтусемпе ответсен вечерĕ" пулат. Вĕсене те хаçат-журналсене сăнапа вулас ĕçе организацилене пекех организацилемеле. Анчах вечерта квалификацилĕ руководител пулмала. Ыйтусемпе ответсен вечерне лайăх организацилесен, вĕсем питĕ анăçлă иртессĕ. Анчах ыйтусемпе ответсен вечерне тĕн пирки диспут туса хумала мар. Диспут вăл тĕне хирĕçле пропагандăн йурăхсăр мечод. Вăл ыйтăва анлăна пулăшмасть, пире хирĕçле çынсене пĕрлештерме анчах пулăшат.

Йалта йаланах каçхине çăмрăксем те, ваттисем те пухăнса ларнине кашни стена хаçат редакторĕсем пĕлет. Анчах редакторсем нумайĕшĕ çакнашкал пухăнса ларнисемпе сектантсем хăйсемшĕн, пире хирĕçле ĕç тума усă курма хăтланнине пĕлмессĕ. Стена хаçачĕ çакнашкал ĕçсенчен ахалех иртсе кайма пултараймасть. Стена хаçачĕн çакнашкал чухне турăсăрсен активне ура çине тăратмала.

Турăсăрсен кĕтесси çук колхоз клубĕ тата вулав çурчĕ питĕ начар вара. Турăсăрсен кĕтессинче тĕне хирĕçле плакатсем, лозунгсем, картинсем, кĕнекесен выставки, ыйтусемпе ответсен хăми пулмала. Вăл кĕтессе йаланах çĕнĕ материалсемпе çĕнетсе тăмала. Стена хаçат редколлегийĕ çак ĕçе турăсăрсен активне анлăн хутшăнтармала. Стена хаçачĕн хăйĕн тĕне хирĕçле пропагандă ĕçне организацилес ĕçе пуçармала. Сăмахран, фанер хăминчен шчит туса, унта хаçат-журналсем çинче тĕне хирĕçле пропагандă тăрăх çырнă статйасене касса илсе çыпăçтармала.

Хаçатра йе журналра чиркӳ çыннисен йе сектантсен контрреволюцилĕ, шпионла ĕçĕ çинчен статйа пичетленĕ пулăр. Стена хаçачĕн çак статйана касса илсе шчит çине çыпăçтармала. Çакнашкал шчитсене халăх пухăнакан вырăнсене кусарса çӳремеле, шчита çĕнĕ материалсемпе, интереслĕ материалсемпе: статйасемпе, карикатурăсемпе, картинсемпе, фотоӳкерчĕксемпе çĕнетмеле.

Тĕне хирĕçле ĕçĕн лайăх формиекскурси пулат. Екскурсире пулнă çын лектор сăмахпа калаçнине хăй куçĕпе курат.

Колхозра мĕнле екскурсисем организацилеме пулат? Çывăхри совхоза, опытлă кăтартулă участка, хата-лабораторине, çывăхри електростанцине, уйа, çаран çине, ĕлĕк монастыр пулнă çĕре кайса курма пулат.

Електростанцине кайса курни çынăн вăйхăватне, техника ӳсĕвне кăтартат. Çакăн пек екскурси тĕн тĕмĕнне тĕлĕнмелле ĕçсем çинчен пĕлессĕ, кайа аулнă хресченсем хушшинче халĕ те Илйа пророка, вăл „çиçĕм çиçтернине, аслати аваттарнине" ĕненекенсем пур.

Ĕлĕк монастыр пулнă çĕре кайса курни тĕн çыннисен класлă роље, вĕсен експлоататăрлă системине пĕлме пулăшат, тĕн çыннисем йепле аскăнланса пурăннине, чиркӳ контрреволюцилĕ ĕçсем тунине пĕлме пултараççĕ. Редколлеги членĕсен активпа пĕрле канашламала, мĕнле екскурсисем тата ăçта каймали çинчен сĕнӳ парса стена хаçачĕ çине çырмала. Кунта вырăнти условисене шута илмеле.

Кашни стена хаçачĕннех турăсăрсем агитаципе пропагандă ĕçне уйрăмăн мĕнле туса пынине çутатмала. Турăсăрсене ĕненекен çын сумне çыпăçтармала.

Колхоз клубĕпе вулав çурчĕ агитаторсемпе мĕнле ĕçлет? Çак ĕçре агитаторсемпе пропагандиссене партипе комсомол организацисем мĕнле пулăшаççĕ? Çаксем çинчен пурин çинчен те стена хаçачĕсем çине çырмала, çитменлĕхсене критиклемеле. Лайăх агитаторсен ĕçĕсене хаçатра кăтартмала, вĕсен опычĕсене ытти çĕре куçармала.

Стена хаçачĕсен тĕне хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе актив хатĕрлеме клубсене, вулав çурчĕсене пур майсемпе те пулăшса пымала. Актив пулăшса пымасăр клубпа вулав çурчĕн пуçлăхĕсем хăйсем тĕллĕн ĕçе нумайăх сарса йараймĕç. Актива пĕтĕçтерсе çитĕнтерес çĕрте Турăсăрсен Сойузĕн йачейкисем пĕртенпĕр лайăх формă пулса тăраççĕ. Çавăн пек йачейкăна кашни клубăн, кашни вулав çурчĕн организацилеме тăрăшмала. Вăл йачейкăна мĕнле организацилесе ĕçе мĕнле чĕртсе йамали çинчен инструкцисем район центрĕнче кирек хăçан та илме пулат.

Турăсăрсен йачейки клубри, вулав çуртĕнчи ĕçлекенсене кружоксем, кĕтессем, вечерсем, калаçусем туса иртерне çĕрте питĕ те пысăк пулăшу пама пултарат. Йачейка хăйĕн членĕсем урлă тĕне ĕненекенсен килĕсенче, хĕрарăмсем хушшинче уйрăм калаçусем туса ирттерме пултарат.

Сталинла Конституци пирĕн çĕршывра тĕне хирĕç пропагандă сарас алăка уçса пачĕ. Çав ирĕклĕхе халăх хушшинче пурнăçласа пыракансем турăсăрсен йачейкисем пулса тăраççĕ те ĕнтĕ.

Турăсăрсен йачейки вăл ирĕклĕ организаци. Унăн тĕп ĕçĕ, тĕп задачĕ—тĕне хирĕç пропагандăна сарса пырасси. Унăн лозунгĕ: „Тĕне хирĕç кĕрешни — социалисăмшăн кĕрешни". Стена хаçачĕн колхоз клубĕсене, вулав çурчĕсене—çав йачейкăсене лайăх ĕçлекен йачейкăсем тума пулăшса пымала. Йачейкăна колхозниксемпе колхозницăсене кĕртессишĕн агитацилемеле.

Тĕне хирĕç пропагандă сарас тĕлĕшпе кашни стена хаçачĕннех темĕн чухлĕ материалсем пулма пултараççĕ. Ку йенĕпе тĕн праçникĕсен сийенĕсене илсе кăтартсан питĕ те аван пулат. Сăмахран: тĕн праçникĕсенче колхозниксем ĕçлемесĕр çӳрени, тĕн праçникĕсем хуçалăха мĕн чухлĕ сийен кӳни, тĕн праçникĕсенче пуп тавращĕсем пуйса йулни çинчен кăтартса памала.

Тĕн йăлисене хисепленипе мĕн чухлĕ сийĕн пулни çинчен колхозниксене çине тăрса, пĕр ывăнмасăр ăнлантарса пымала. Йумăçсен ултавĕсене тăрă шыв çине кăлармала, колхоз клубĕсен, вулав çурчĕсен, бољницăсен, ача йаçлисен ĕçĕсем çинчен тĕплĕн çырмала, совет праçникĕсене тивĕçлипе чыслама вĕрентмеле.

Хăшпĕр стена хаçачĕсем пупсем çавна та, кăна тăваççĕ тесе çыраççĕ. Анчах пупсен контрреволюцилĕ агитацине хирĕç вимĕн те тумаççĕ. Çапла вара ун пек стена хаçачĕсем контрреволюцилĕ сăмахсене хăйсем сарма пулăшса, контрреволюцилĕ елементсен трибунĕ пулса тăраççĕ. Стена хаçат редакторĕ тĕне хирĕç кĕрешес мăтăва хăй тĕллĕн хăй пĕччен ларт-

ШУПАШКАР ХУЛИ

7-мĕш участкăри суйлав

Декабĕрĕн 12-мĕш. Вăхăт пилĕк сехет çурă. Нагорнăй урамĕнче оркестр сасси пĕтĕм хулана илтĕнмеле янăраса кайрĕ. Вăхăт нумайăх та иртмерĕ, суйлав тумĕпе илемлетнĕ, пилĕк кĕтеслĕ çута çăлтăрпа государствă флагĕ ялкăшса тăракан икĕ хутлă çурт умне пĕр ушкăн халăх стройпа çитсе те тăчĕ. Вĕсем аслă праçнике участкăра пуçарса яраканнисем пулас, тесе шухăшланăччĕ, анчах вĕсенчен маларах çитнĕ суйлавçăсен ушкăнĕ хирĕç тухса, вĕсене хапăл турĕ. Суйлавçăсем пурте суйлав çуртне кĕрсе вырнаçрĕç.

Вăхăт шăп ултă сехет.

— Йулташсем, Аслă Совета суйлама тытăнатпăр,—терĕ участкăри суйлав комиссьи председателĕ Василйев йулташ.

— Епĕ пилĕк сехетрех суйлав çуртне çитнĕ, йуратнă кандидатсене депутата суйлама бÿллетенсене хăвартрах алла илесчĕ,—тесе суйлав комиссьи членĕсем ларакан сĕтел патне, ковйор сарнă пусма тăрăх çăмăллăн пырса тăчĕ 55 çулхи Таврина Марийа йулташ.

— Епĕр те сантан кайах йулман, çав ĕмĕтпех килнĕ,—терĕç харассăн темиçе сасă. Вĕсем хушшинче тата аслăрах çултисем,—утмăл-çитмĕле çитнисем те пур.

— Манăн йат списăка 1021 номĕрпе кĕнĕ, акă паспорт,—терĕ сухаллисене йакаткаласа 56 çулхи Покровский Владимир суйлавçă. Вăл та ыттисем пекех хăйĕн сассине Аслă Совета суйлама палăртнă чыслă кандидатсене парса, бољшевиксен партине, аслă Сталина чĕререн йуратнине пĕлтерме васкаŤ.

Шурă, кăвак, çутă симĕс бÿллетенсемпе шурă канверт алла илсе тепĕр пÿлĕме вăрттăн сасăлама васкаса кĕрсе кайрĕç.

— Есĕ йулташ пĕрремĕшне, есĕ иккĕмĕшне... есĕ виççĕмĕшне,,, кашнине уйрăм пÿлĕме çул кăтартрĕ комиссьи членĕ, орденоносец Табаков йулташ. Сĕтел умĕнчен сынтăн çÿлĕ ларакан чечек йавăç çисем тавра çаврăнса харăсах вунтăваттăн уйрăм пÿлĕмсене кĕрсе кайрĕç.

Темиçе çекунтранах Совет Сойузĕн гербĕпе илемлетнĕ, хĕрлĕ сăрпа сăрланă йещчĕк—урнă ăшне канвертсем йама тытăнчĕç. Суйлава пынă ĕçхалăхĕн хаваслăхне, çĕкленÿне, сăмахпа тупса каласа пама йавăр. Мĕншĕн пайан чи пысăк праçник, çитмĕл çул пурăнса та епĕ ку таринччен пĕтĕм халăхăн çав тери пысăк савăнăçне курман,—тет авалхи вушалă пурнăçра, помещиксен мăшкăлне тÿссе курнă Александра Љвовна Иванова йулташ. Вăл Аслă Совета ирĕклĕн суйлама пултарнишĕн пĕчĕк ача пек савăнаŤ. Вăл çеç мар, 7-мĕш участкăри пин çурă ытла суйлавçăсем пурте социализм çĕнтерĕвĕн чи паллă страници пулса кĕрекен историлĕ кун—декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, Аслă Совета суйлама хаваслăн тухрĕç.

Чăвашпромсойуз çуртне вырнаçнă, Шупашкар хулинчи 7-мĕш участкăри суйлав комиссьи суйлавçăсене кĕтсе илме лайăх хатĕрленнĕ. Хулари тĕрлĕрен обществăлă организацисем пулăшнипе, суйлав участкинче суйлавçăсене аслă праçнике кĕтсе илме мĕн кирлине пурне те тунă. Суйлав пуçланнă çĕре пĕчĕк ачасене йышăнмали пÿлĕм хăй патне ачасене илĕртсе лараŤ. Тĕрлĕрен теттесем, патефон, канфет пур ачасен пÿлĕмĕнче. Вата карчăксемпе мучисем те ачасен савăнăçлă пÿлĕмне ытараймасăр курма кĕреççĕ.

Кĕтмели залăна тĕрлĕрен картинăсемпе, плакатсемпе илемлетнĕ. Унта патефон, радио янăраса лараŤ, хаçат-журналсем, шашкă-шахмăт, домино вăййисене выљăмă пулаŤ. Кĕнеке сутмали киоск. Инкекрен малтанхи пулăшу паракан йатарласа тунă пÿлĕмре врачсемпе санитарсем хăйсен ĕçне пурнăçлама хатĕрех тăраççĕ. Буфетра кирлĕ çимĕçсем пурте пур. Ваттисем тата тĕрлĕрен çăлтавсемпе суйлав çуртне пыма пултараймăннисене икĕ çăмăл автомашинă тата пĕр мăшăр рысак лашасем кунĕпех килтен суйлав участкине илсе пырса ăсатса тăчĕç.

93 çулта пулин те Аслă Совета суйлама çуранах пыма шухăшланăччĕ, шăп пахчаран тухнă çĕре рысакпа çил-тăман кăларса „йамшăк" çитсе те тăчĕ. Кайала автомашинăпа леççе йачĕç. Ку таринчен машин çине ларса курманчĕ. Мĕншĕн бољшевиксен партишĕн чĕререн ĕçлекен, Сталин хушнине пурнăçлакан кандидатсемшĕн — Стецкий, Чкалов, Андрейева йулташсемшĕн пĕтĕм хаваслăхпа сасăлас мар, мĕншĕн Сталин йулташа спасибă калас мар,—тесе пĕлтерет Геронтйев старик хăйĕн шухăшне.

— Тухса кайас килмест ку çуртран, йепле çăмăл, савăнăçлă,—тет вăйсăрланнă, икĕ йаш каччă хулĕнчен тытнипе кăна тăракан кинемей хăйне машинăпа лартса кайма сĕнекен çынна.

Аслă Совета суйланă кун мĕншĕн пысăк праçник пулса тăнине, мĕншĕн совет влаçне çав тери тав тумалине Халтурин урамĕнчи 17-мĕш çуртра пурăнакан 80 çулхи Сидоров Ф. старик лайăх каласа параŤ.

— Епĕ 80 çула çитнĕ ĕнтĕ. Атте крепостной хресчен пулнă,—тет Сидоров.—Атал тăрăх баржăсем туртса çÿренĕ. Помещик хресченсене виççĕр тенке сутатчĕ. Епĕ хамăн йамăкăма помещикран 300 тенкĕлĕх баржă туртнă çĕрте ĕçлесе ирĕке кăларнă. Епĕ 18 çула çитсен висĕ крепостной çемйине улăштарнă йытта кăтартрĕç. Вăл шутра пирĕн çемйе те пулнă, ăна епĕ астăваймастăп. Патшапа улпутсен влаçĕ крепостной хресченсене хĕнесе вĕлернине епĕ хам куçпах курнă. Пĕррехине крепостнойа хĕнесе вĕлерчĕç. Унăн уринче сăнчăр пулнă. Апла çĕре пытарма май килмен. Сăнчăр çăрине уçакан жандарм килте пулман. Вара асаплантарса вĕлернĕ çын урине пуртăпа татса ÿтне çĕре чикрĕç. Пайан епĕ Аслă Совета суйлама пуçăнассине темĕн пек кĕтрĕм. Хамăн утма вăй çитмест. Ирех суйлав участкине ачан ывăлне йатăм. Спасибă машинăпа илсе çÿренĕшĕн, спасибă Сталин йулташа, совет влаçне, бољшевиксен партине,—тесе савăннипе куççÿлĕсене шăлса тав тăваŤ Сидоров.

Суйлав пуçланни ултă сехет иртнĕ тĕле участкăри суйлавçăсенчен 70 проценчĕ сасăласа пĕтерчĕç. Каçхине çичĕ сехет çитнĕ çĕре тĕпрен илсен суйлавçăсем пурте сасăлама ĕлкĕрчĕç. Участкăна кĕрекен 1648 суйлавçăран вунултăшĕ кăна суйлава хутшăнмасăр йулчĕç. Партире тăманнисемпе коммунисcем пĕрлешсе палăртнă ĕçхалăхĕн чаплă çыннисемшĕн—Чкалов, Стецкий тата Андрейева йулташсемшĕн пысăк хаваслăхпа сасăларĕç.

7-мĕш суйлав комиссьи суйлавçăсенчен актив хатĕрлесе, вĕсемпе тачă çыхăнса ĕçленипе суйлава ăнăçлăн ирттерсе йама пултарчĕ.

В. И. Добрынин.

858 тенкĕлĕх сарнă

СĔРПУ. Ивановри почтаљйон Ткачов йулташ 68 çула çитнĕ пулин те хытă тăрăшса ĕçлет. Вăл Çĕрпури почтă уйрăмĕнче пĕрремĕш ударник шутланаŤ. Ткачов й. массă хушшинче пысăк авторитетпа усă кураŤ. Хаљ вăл 1938 çулшăн 858 тенкĕлĕх тĕрлĕрен хаçат-журналсем сарнă. Çĕнĕ çулчченх тепĕр çаван чухлĕ саратăп, тесе шантараŤ.

Ф. Кириллов.

Вулав сурчĕсен пуçлăхĕсем заочнă вĕренеççĕ

ВĂРНАР. Районри çутĕç пайĕ йалсенчи вулав сурчĕсен пуçлăхĕсем ваљљи заочнă йĕркепе вĕренмели курс уçрĕ. Кунта избачсем пурте çырăннă. Заочниксемпе кашни уйăхра пĕрре консуљтацилĕ ваљатисем туса ирттереççĕ.

Ст. Улангай.

са татса параймасŤ пулсан, ку ыйту тăрăх лайăххрах пĕлекен çынсемпе, районти хаçат редакцийĕсемпе каласса пăхмала.

Пупсен киревсĕр ĕçĕсене палăртса пынă хушăрах, стена хаçачĕн тĕне ĕненекенсене нимĕнле майпа та кÿрентерме, командоваŤ тума, администрацилеме йурамаŤ.

Час-часах ĕç çапла пулаŤ: колхозри çамрăксем „чиркĕве, сектантсем патне кайаççĕ. Мĕншĕн кайаççĕ вĕсем унта? „Мĕншĕн тесен унта „хитре йурлаççĕ". Çав вăхăтрах клуб, вулав çурчĕ нимĕн ĕçлемесĕр лараççĕ. Колхоз клубĕсене, вулав çурчĕсене тăрлавлă ĕçлеттерсе пымала. Вĕсенче йаланах çĕнĕ хаçат-журнал пултăр. Кирек йепле ыйтупа ответ илме май пултăр. Биллиард, шахмăт, шашкă вăййи пултăр. Илемлĕх ĕçĕн кружокĕсем ĕçлеччĕр.

Колхоз клубĕсем, вулав çурчĕсем йалта куљтурлă центрсем пулса тăччăр. Вара вĕсем тĕне хирĕç пропагандă сарас тĕлĕшпе те пысăк пулăшу парĕç.

Анчах тĕне хирĕç кĕрешес мĕн пур пек ĕçе Турăсăрсен йачейкисем, клубсем, вулав çурчĕсем çине кăна йавантарсан—стена хаçачĕ питĕ те пысăк йанăш тунă пулĕччĕ. Тĕне хирĕç кĕрешес ĕç вăл мĕн пур коммунисcен, комсомолецсен, тĕрлĕрен обществăлă организацисен, мĕн пур куљтурăлă вăйăн ĕçĕ пулса тăраŤ. Стена хаçачĕ шкула кĕрсе пăхтăр. Тĕнĕ хирĕç кĕрешес ĕç шкулта мĕнле пыни çинчен çыртăр. Партипе комсомол организацисем хăйсем тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе мĕнле лартни çинчен çырса тăтăр.

Кашни колхозрах турра ĕненмен çынсем нумай. Вĕсене клуб, вулав çурчĕсен ĕçне хутшăнтармала. Кашни стена хаçат редакторĕн стена хаçатне бригадăра, колхозра, йалта тĕне хирĕç кĕрешес ĕçре чи лайăх пропагандис тума тăрăшмала. Пирĕн хамăрăн пропагандăпа мĕн пур ĕçхалăхне тĕн сĕрĕмĕнчен хăтарас задачăна лартмала, ăна пурнăçа кĕртессишĕн ĕçлемеле.

ХАЙ ЖИВЕ РІВНОПРАВНА ЖІНКА СРСР
АКТИВНА УЧАСНИЦЯ В УПРАВЛІННІ ДЕРЖАВОЮ
І УПРАВЛІННІ ГОСПОДАРСЬКИМИ І КУЛЬТУРНИМИ
СПРАВАМИ КРАЇНИ!

Украинăри „Искусствă" издателстви кăларнă плакат. (М Йунак художник хатĕрленĕ).

(Сойузфото).

Чаплă уйав хыççăн

КУСЛАВККА, декабĕрĕн 14-мĕшĕ (телефон тăрăх). Суйлав кунĕ кашнин йăстанĕнче ĕмĕр манми чаплă савăнăçлă кун пулса тăчĕ. Халĕ ĕççыннисем хушшинче вĕçĕмсĕр савăнăçлă сăмахсем.

— Епĕ телейлĕ çăлтăр айĕнче ÿссе çитĕнтĕм. Кăçал 18 çула çитсе Аслă Совета суйлама телейлĕ пултăм. Епĕ суйлав кунне производствăра ÿсĕмсем тунипе уйавларăм. Суйлав умĕнхи сталинла вунăкунлăха хутшăнса нормăна 150 процент тултарса пытăм. Суйлав кунĕ мана пысăк вăй, хаваслăх пачĕ. Епĕ хамăн хăвăртлăхсене тата ÿстерсе пыратăп,—тет каскалакан цехри рабочи Николай Лубов.

Суйлав кунĕ пĕтĕм ĕççыннисемшĕн пурнăç, ĕç, кану, вĕренÿ çине çĕнĕле пăхма чаплă шкул пулса тăчĕ.

— Суйлав тапхăрĕ мана массăпа ĕçлеме, массăсем хушшинчи кирлĕ ыйтусене хăвăрттăн тупма вĕрентрĕ. Государствă ĕçĕсемпе таччăн çыхăнтарчĕ,—тет Чĕшкасси суйлав участкин председателĕ Иванова йулташ.—Пирĕн участкăра суйлав пысăк хастарлăхпа иртрĕ. Суйлавçăсем хăйсен бÿллетенĕсене вунă сехет тĕлне парса пĕтерчĕç.

Суйлав кунĕ ĕççыннисене малашне тата лайăхрах ĕçлеме пысăк вăй-хăват пачĕ. Комбинатри рабочисем халĕ çулталăк планне тултарассишĕн сталинла вунăкунлăхра пулнă хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Сталинла вунăкунлăхра нумай рабочисем икшер нормă тултарнă. Касакан цехри стахановка Моткова Анна вунăкунлăхра плана 206 процент тултарнă, Илйина Марийа 126 процент, Михайлов 121 процент, Федорова Нина 150 процент тата ыт. те.

Суйлав тапхăрĕнче агитатор, доверенный, суйлав комиççи членĕсем пулса ĕçленĕ çынсем халĕ çĕнĕ хаваслăхпа хăйсен ĕçĕçенче ĕçлеме тытăнчĕç. Суйлав комиççин председателĕн заместителĕ пулнă Никифоров йулташ хăйĕн малашнехи ĕçĕсенче суйлав тапхăрĕнчи опытсемпе усă курса хăйĕн сменине малти вырăна кăларма пулчĕ.

М. Титов.

Çуртсене тĕплĕн йышăнмала

Государствăн пурăнмали çуртйĕр фондне тĕрлĕрен майсемпе тÿрех тата вăрттăн салатса пĕтерессине чарса лартас, пурăнмали çуртйĕрсемпе спекуљаци тăвассине чарса лартас тесе, çавăн пекех тата ССР Сойузĕнчи граждăнсен ÿссе пыракан ыйтувĕсене йÿнеçтерме пурăнмали çуртйĕр хуçалăхне тытса тăрассине кирлĕ пек организацилес тесе,—ССР Сойузĕн Еçтăвакан Тĕп Комитечĕпе халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăçалхи октабĕрĕн 17-мĕшĕнче пурăнмали çуртйĕре тарапаракан кооперацине—ЖАКТ-сене тата çуртйĕр строителстви кооперативĕсене пĕтерсе, çуртйĕрсене вырăнти советсемпе государство предприйатисен аллине парасси çинчен постановлени йышăнчĕç.

Шупашкар кула Совечĕн коммуналлă пайĕ çак постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕç планĕ тунă. Шупашкар хулинчи коммуналлă хуçалăхăн 6 çуртйĕр управленийĕ пулаŤ. Халĕ çуртйĕр управленин пуçлăхĕсене çирĕплетнĕ.

Вĕсене чи шанчăклă çынсенчен уйăрса илнĕ. Вĕсем хушшинче парти членĕсем, профсойуз работникĕсем, активлă килхуçи хĕрарăмĕсем. Акă Гуçкова йулташ, вăл килхуçи хĕрарăмĕ-активисткă; Гаврилов йулташ—парти членĕ, ăна 5-мĕшпе 6-мĕш çуртйĕр управлени пуçлăхĕ пулма çирĕплетнĕ; Алексейев йулташ—профсойуз работникĕ т. мт. Вĕсенчен 2 килхуçи хĕрарăмĕ.

Хаљхи вăхăтра çуртйĕрсене парса-йышăнасси пыраŤ. Çуртйĕрсене пайă-йышăннă çĕрте, çуртйĕр йенĕпе ĕçлекен техник йертсе пыракан комиççи ĕçлет. Анчах комиççи нимĕн те васкамаŤ-ха. Ку тарана çитсе те вĕсем 2 çуртйĕр управленин çурчĕсене çеç илнĕ. Ку вăл пысăк çитменлĕх пулса тăраŤ. Комиççи шутланă тăрăх, çуртйĕрсене парса-йышăнас ĕç декабĕрĕн 15-мĕшĕнче пĕтмеле. Çуртйĕрсен финанспа инвентаризацине тĕрĕслеме пуçланă, анчах çителĕклĕ мар, хăшпĕр çуртйĕр управленисенче халĕ те ĕçе тытăнман. Уйрăм граждăнсене усă курма ирĕк панă çуртсенчи çынсемпе типлă договорсем тума манса кайнă. „Епĕр миçе тенкĕ çинчен илсе шутламалине пĕлместпĕр"—тесе лараççĕ вĕсем.

Кашни çуртйĕр управленине 15 çуртран пуçласа 30 çурта çити кĕрет. Вĕсен пурăнмали площчĕдĕ 1700—1800 тăваткăл метра çитет. Пурăнакансем пĕтĕмпе 2.300 çын ытларах шутланаççĕ.

Çуртйĕр управленин срука вăраха йамасăр çуртйĕрсене парас-йышăнас ĕçе вăйлăн пуçарса йамала, çуртсене актпа илнĕ чух пĕтĕм çитменлĕхсене кăтартмала, финанспа пурлăхсене тĕрĕс шута илмеле, çуртсенче пурăнакан çынсемпе халех типлă договорсем туса пĕтермеле.

Çуртсене парас-йышăнас ĕçе хулари пĕтĕм ĕççыннисен активне мобилизацилемеле, активлă ĕçлекен килхуçи херарăмĕсене, секци членĕсене, депутатсене, активиссене ĕçе активлăн хутшăнтарса пĕтĕм ĕçе вăхăтра туса пĕтермеле.

С. Воробйов.

МАНМИ КУН

(Хамăр корреспондентран)

Декабĕрĕн 12-мĕшĕ. Пайан ирех Шуртавăш йалĕ вăранчĕ. Пилĕк сехет иртсенех çынсем йĕри-тавра йалавсемпе, лозунгсемпе илемлетсе пĕтернĕ пысăк шкул çурчĕ патнелле утма пуçларĕç.

Шуртавăш — суйлав участкин центрĕ. Кунта çĕрщывăн Аслă Советне депутатсем суйлаççĕ. Суйлав ултă сехетре пуçланмала, халĕ 5 сехет те вăтăр минут çеç, çапах кĕтсе лармали пÿлĕме суйлавçăсем пухăнма пуçларĕç. Вĕсем кашнийех суйлав участкин пÿлĕмĕсене мĕнле илемлетнине пăхса çаврнаççĕ. Хыр-чăрăш турачĕсемпе илемлетсе пĕтернĕ стенасем хушшипе вăрмана утса пынă пек утса, кĕтсе лармали пÿлĕме кĕреççĕ. Кунта радио, патефон, икĕ хуткупăс пур. Пĕри чăрăнаŤ те тепри йурлама пуçлаŤ.

Комсомолец И. Лукин йулташ патефон çине Сталин йулташăн докладне çырса илнĕ пластинкăна вырнаçтарса хучĕ. Аслă пÿлĕм хыттăн алă çупнипе йанрама пуçларĕ. Ватă çынсем, çамрăккисем те Сталин йулташăн докладне итлеме пуçларĕç. Унтан каллех йурă, ташă. Хăшĕсем шашкăла, шахмăтла выљаççĕ, хаçат-журналсем вулаççĕ.

— Çакă хаваслă, тулăх пурнăçа совет влаçĕ, коммунисла парти, аслă Сталин пачĕ. Епĕ хамăрăн суйлав участкинче пуçласа хамăн сассăма партийецсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн патăм. Епĕ Чкалов, Андрейева, Краснов йулташсемшĕн сасăласа, Сталиншăн, коммунисла партишĕн тата та телейлĕрех, савăнăçларах, малашлăхшăн сасăларăм,—терĕ Йаков Григорчă.

Йаков Григорчă кăна мар, суйлавçăсем пурте совет çĕршывĕн чи лайăх ывăлĕсемшĕн савăнсах сасăлаççĕ.

„Первое мая" колхозри суйлавçăсем колхозăн чи лайăх лашисене кÿлсе, хĕрлĕ йалавсем вĕлкĕштерсе, хуткупăссем каласа пычĕç. Вĕсене Шуртавăш йалĕнчи колхозниксем йалавсемпе тухса кĕтсе илчĕç. Вĕсем кĕтсе лармали пÿлĕме кĕрсе ăшăнмала чей ĕçрĕç. Музыкă итлесе ларчĕç. Ташларĕç. Йурларĕç. Вара пĕрерĕн-пĕрерĕн суйлав комиççин секретарĕ патне бÿллетенсем илме пыра пуçларĕç.

Суйлав питĕ пысăк организацилĕхпе, активлăн иртрĕ. Ватă суйлавçăсене чи лайăх лашасемпе илсе пычĕç. Йалпо йатарласа организацилене буфетра çимели те çителĕклĕ, ĕçмели—квас, чей пур.

Ултă сехет çитрĕ. Пĕрремĕш бÿллетене „Красный флаг" колхоз колхозникĕ Григорйев Йаков Григорйевич илчĕ.

Йаков Григорйевич колхоза кĕричченх савăнса курман, тăлăх ÿснĕ. Вăрман улпучĕ патĕнче тарçăра пурăннă, кĕтÿре çÿренĕ. Канлĕн çывăрса курман. Çемйе йышлă. Çавăнпа Йаковăн çамрăклăх ашшĕпе пĕрле тарçăна кайма тивнĕ, вĕренÿ çинчен шухăшламали те пулман. Мĕн пурĕ те пĕр çула йахăн çеç вĕреннĕ. Тĕрлĕ улпутсем патĕнче пурăнса ĕçлесе куртăм, анчах пурте пĕрехчĕ, усалччĕ. Тарçăсене йытă вырăнне çеç шутлаччĕç. Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Дубровин улпут патĕнче, Хусан кĕпĕрнинчи Шчетинкин улпут патĕнче, Мешков хуçан, Нобел тăванĕсен пăрахучĕсем çинче матроспа пурăнна, кунĕн çĕрĕн ĕçленĕ, анчах пурнăç нимĕн чухлĕ те йусанман. Çав-çавах çĕрĕк, хура пÿрт, çав-çавах йапăх пурнăç,—тет вăл.

Йаков Григорчă колхоза кĕрсен тин çутă çĕнĕ пÿрт лартнă. Енелĕ пулнă. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна 3—4 хутчен те премиленĕ. Унăн семйи пысăк, анчах вăл çемйе пысăккишĕн, „нумай ача-пăчана мĕнле тăрантарса усрас" тесе куљанмаŤ. Кăçал вăл государствăран 2 пин тенкĕ пулăшу илнĕ. Унăн ачисем пурте пекех вĕренеççĕ.

Пĕкĕсем çине шăнкравсем çакса суйлав участкине килеççĕ.

— Кун пек савăнăçлă куна халиччен курман. Тухса та кайас килмест кунтан, çав тери çавăнăçлă,—теççĕ стариксемпе карчăксем.

Суйлавçăсем кăнтăрла иртсен 3 сехет тĕлнеле сасăласа пĕтерчĕç. Мĕн пурĕ висĕ йалти суйлавçăсенчен 9 çын çеç, питĕ йывăр чирлĕ пирки суйлава пыраймарĕç.

Хăйсен граждăнлă тивĕçлĕ парăмне пурнăçласан, суйлавçăсем килĕсене апатсем кайса çинĕ хыççăн каллех шкула пухăнчĕç. Йурă-ташăсем çурçĕрчченех пычĕç.

Çапла иртрĕ суйлав Шуртавăш участкинче.

Усли Васлейĕ.

Финанс ĕçне манăçа хăвармала мар

Пирĕн кăçалхи çул укçа-тенкĕ пухас ĕç урăх йĕркесемпе пулса пыраŤ. Йалхуçалăх налогĕпе страховкă укçисене йалсоветсем мар, районти финанс пайĕ пуçтараŤ. Йалсоветсен самообложенипе займ укçисене пухмала.

Налогпа страховкăсене пирĕн пухмала мар, ун çинчен массăна ăнлантарса парасси те пирĕн ĕç мар, тесе шутлама пăхаççĕ чылай йалсовет работникĕсем.

Мĕнрен кураŤ-ха вăл?

Çĕрпÿ районĕнчи налогпа страховкă пухакан инспектор Йадров хăйне çирĕплетсе панă йалсоветри колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче йалхуçалăх налогĕ пухас ĕç мĕнле пыни çинчен çапла каласа параŤ:

Аслă Тугаљ йалсовечĕ тăрăх финплана 85 проц. пурнăçланă, 1-мĕш Степановски йалсоветĕнче 5971 тенкĕ пухмала пулсан, 4866 тенкĕ пухса, 81 проц. пурнăçланă, Шĕнер йалсовечĕ тăрăх 7893 тенкĕ пухмала пулсан, 4569 тенкĕ пухса, плана 58 проц. çеç пурнăçланă, Йĕкĕрвар йалсовечĕ тăрăх 10276 тенкĕ пухмала, 5707 тенкĕ пухнă. Пĕрремĕш Вăрманкасси йалсовечĕ тăрăх плана 47 проц. анчах пурнăçланă.

Аслă Тугаљ йалсоветĕнче налогпа страховкăсене инспекторсем кăна пырса пухассине шанса лармаççĕ, çавăнпа вĕсем финанс планне 85 процента çитерме пултарнă. Унта Йантуш йалĕнчи йалуполномоченнăй пулса ĕçлекенскер, Иванова Анастасийа хăйсен йалĕнчи колхозниксемпе йединоличниксене укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра татасси çинчен тĕплĕн ăнлантарса параŤ. Вăхăтра тÿлесен пени ÿсессинчен хăтăлаççĕ.

Шĕнер, Йĕкĕрвар тата Пĕрремĕш Вăрманкасси йалсоветĕнче ĕçлекенсем йалхуçалăх налогĕпе страховкă укçисене вăхăтра тÿлетересси пирки массă хушшинче ăнлантарса парас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемен.

Йалсоветра ĕçлекенсем самообложенипе займ укçисене пухассипе те çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Вĕсем йалсене тухса пуçтарма шутламаççĕ, йалсоветне пырса тÿлессине шанса лараççĕ. Шĕнер йалсовечĕ самообложени укçине 200—300 тенкĕ анчах пухнă. Пухнă укçасене те банка вăхăтра кайса хывмаççĕ. Нойабĕр уйăхĕнче самообложени укçине чылай пухнă пулнă. Анчах вăл самообложени укçине пĕр пус та банка кайса хывман. Ревизи комиççисем те çакăнпа килĕшсе пурăнаççĕ. Çак тĕслĕхсем мĕн çинчен калаççĕ-ха? Йулашки вăхăтра йалсоветра ĕçлекенсем укçа-тенкĕ пухасси çине çийелтен пăхма пуçланине кăтартаççĕ вĕсем.

И. Михайлов.

Хаçатра пичетленсе тухман заметкăсем тăрăх

★ Редакцине килнĕ „Колхозри тăшмансем" тенĕ çырура Шетмĕпуçĕнчи (Ишлей р.) „Восток" колхоз председателĕ Попов колхоз пурлăхне йухăнтарни, çĕртни тата колхозниксене нимĕн айăпсăрах хĕнесем çинчен çырнăччĕ.

Çырувă тĕрĕслеме редакци Ишлей районĕнчи прокурор патне йаначчĕ. Заметкăна прокурор вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн, Попова айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă пулнă. Халĕ следстви пĕтнĕ. Попова суда панă.

★ „Тăшман ответ тытмасăр йулма пултараймаŤ" тесе, Трофимов йулташ Шупашкар районĕнчи Шурка йалсовет председателĕ Йевграфов ĕçе йапăхтарни, шкул укçине вырăнсăр çĕре расхутлани, тата „Победа" колхоз председателĕ Сергейев колхозра сăтăрла ĕçсем туса, колхоз пурлăхне йухăнтарни, çĕртни тата ыттисем çинчен те çырнăччĕ.

Заметкăна редакци тĕрĕслеме ПСК(б)П Шупашкар райкомне йачĕ. Заметкăна тĕрĕсленĕ. Заметкăра çырнă чылайĕш фактсем тĕрĕс пулнă. „Победа" колхоз председателне—Сергейева халăх сучĕ 3 çуллăха тĕрмене хупмала пригăвăр йышăннă.

★ Леонтйев йалкор Шăхасан районĕнчи Туçи Çармăс йалсовет председателĕ Степанов Петр халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытни, колхозниксене саккунсăр арестлени, хĕнени тата ытти унăн ирсĕр ĕçĕсем çинчен çырнăччĕ.

Ку çыру пирки Шăхасан райĕçтăвкомĕнчен Скворцов йулташ редакцине çакăн пек çырса пĕлтерчĕ: „Заметкăра çырнă фактсем тĕрĕс. Райĕçтăвком президиумĕ Степанов Петра ĕçрен кăларса суда пама йышăнна".

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

План комиççи председателĕсен тата райĕçтăвкомсенчи йĕртсе пыракан ытти работниксен ĕçукçине ÿстересси çинчен

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕпе районсенчи Ĕçтăвакан Комитетсенчи план комиççи председателĕсен, вырăнти промышленнăçпа коммуналлă хуçалăх тата социаллă обеспечени пай пуçлăхĕсен ĕçукçи ставкисене 1938 çулхи йанварĕн пĕррремĕшĕнчен пуçласа ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн 1936 çулхи февралĕн 11-мĕшпе ийунĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕсем тăрăх районсенчи Ĕçтăвакан Комитетсенчи ытти пайсен пуçлăхĕсем валљи тунă ĕçукçи ставкисем таран ÿстерсе танлаштармала тунă.

(ТАСС).

Румынири „суйлавсем“ умĕн

БУХАРЕСТ, декабĕрĕн 12-мĕш (ТАСС). Румыни пичечĕ, влаçсем декабĕрĕн 20-мĕшĕнче пулакан Румыни парламенчĕн суйлавĕнчен халăхăн сарлака массине сирсе хăварас майпа тăвакан ĕçсене илсе кăтартать.

Правителствă решенийĕпе 1933 тата 1934 çулсенче запаса кăларса йанă жандармсене пĕр уйăхлăх чĕннĕ. Кăна „йĕркене тытса тăма пулăшма кирлипе“ тунă. Аслă шкулсенче вĕренекен пур студентсене те суйлава хутшăнма чаракан распорйаженисем кăларнă.

Румынире чылай вырăнсенче национал-царанисла партин активлă дейателĕсене çĕнĕрен арĕсленĕ. Провинцисенчен фашиссемпе фашисăма хирĕççисен хушшинче пулакан çапăçусем çинчен пĕлтерсех тăраççĕ.

Клуж хулинче тухса тăракан „Патриа“ хаçат, вырăнти влаçсем хресченсене суйлава хутшăнасран татса хăварас майпа чылай йалсене „йĕрекен чирлĕ“ тесе пĕлтерме Бухарестран кăтартусем илни çинчен пĕлтерет.

Чылай хуласенче массăлă пухусем пулса иртеççĕ. Вăл пухусенче рабочисем, хресченсем тата интеллигенци „Диктатурăна хирĕç, осадă чухнехи пек лару-тăрува хирĕç“, „Демократилĕ ирĕклĕхе йĕркелессишĕн, пĕтĕм политикăлă амнистишĕн“, „Фашисла агрессăрсем пуçласа йанă вăрçăна хирĕç, пайланман мирлĕ саманашăн, ушкăнлă хăрушăсăрлăхшăн, Франципе ССР Сойузĕ хушшинчи килĕшÿве çирĕплетессишĕн“ лозунгсемпе хутшăнаççĕ. Нумай пухусенче национал-цараниссем тата „Тимĕр гварди“, „Жоржиссем“ фашисла организацисем хушшинче йышăннă суйлав умĕнхи килĕшÿве прахăçа кăларма ыйтса резољуцисем йышăнаççĕ.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх рабочисен организацисем пухнă пухусем уйрăмăнах фашисăма хирĕçле иртеççĕ. Вăл пухусенче сăмах тухса калакансем пур организацисенчен контрреволюционерсене—троцкиссене хăваласа кăларма ыйтаççĕ.

Мускав хыпарĕсем

Куљтурăпа кану паркĕ уçăлчĕ

Мускаври Горький йачĕпе тăракан Тĕп куљтурăпа кану паркĕ декабĕрĕн 5-мĕшĕнче хĕллехи сезона пуçларĕ. Паркри каток çинче москвичсем кашни кун йаранаççĕ. Каçхине катоксене темиçе пин електричествă лампăчкисем çутатаççĕ.

Паркра кино-театр, буфетсем, ресторансем ĕçлеççĕ.

Мускав ĕççыннисем вăхăта паркра савăнса иртереççĕ.

Сокољникри парк та ĕçлеме пуçларĕ. Кунта ĕççыннисем йĕлтĕрсемпе, коњкисемпе йаранаççĕ.

Заводри соцкуљтурă двоцĕ

Сталин йачĕпе тăракан автозаводра социалисăмлă куљтурă çуртĕ уçăлчĕ.

Çурт калама çук чаплă. Залсенче, библиотекăсенче, тĕрлĕрен пÿлĕмсенче рабочисем кашни каç кино кураççĕ, выљаççĕ, кĕнекесем, хаçатсем вулаççĕ.

Çурт тавра парк тунă. Унта коњкисемпе, йĕлтĕрсемпе йаранаççĕ.

Красноармейецсем екран çинче

„Мосфиљм“ киностудийĕ „Ленин в Октябре“ йатлă историлĕ кинофиљмăн йулашки пайĕсене ÿкерсе пĕтерчĕ.

Зимний дворецa туртса илнĕ картинăна ÿкернĕ çĕрте Мускаври хĕрлĕ йалавлă Пролетари дивизинчи красноармейецсем, красногвардейецсем пулса выљарĕç. Кинофабрикă работникĕсем красноармейецсем уйрăмах лайăх выљанине палăртаççĕ.

Кинона çак кунсенчех Мускав, Ленинград, Кийев хулисенче кăтартма пуçлаççĕ.

„Хĕрлĕ Çар XX çулта“ выставкă

Хĕрлĕ Çарăн Мускаври Тĕп çуртĕнче „Хĕрлĕ çар XX çулта“ выставкă хатĕрлеççĕ.

Выставкăра художниксем, фото маçтăрĕсем Хĕрлĕ Çар ÿссе тĕрекленнине, Ленин, Сталин, Фрунзе, Ворошилов Хĕрлĕ Çара тĕреклетессишĕн ырми-канми ĕçленине, красноармейецсен пурнăçне кăтартаççĕ.

Выставкă Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă кун—1938 ç. февралĕн 23-мĕшĕнче уçăлать.

Округри красноармейецсен хорĕ

Совет Сойузĕн маршалĕ Оборонă Наркомĕ Ворошилов йулташ пуçарса йанипе Мускаври Пролетари дивизинчи № полкри красноармейецсен хорĕнчен округри хор тунă. Хорта красноармейецсем вырăс, Украинă, Белоруççи йуррисене пысăк маçтăрлăхпа йурлаççĕ.

Чăваш батарейĕ

№ артполкра виççĕмĕш çул ĕнтĕ чăваш батарейĕ ĕçлет. Батарейă кăçал ротăсен, батарейăсен, ескадронсен ăмăртувĕнче округра пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Красноармейец-снайпер Долгов йулташа округри хисеп кĕнеки çине кĕртнĕ, унăн сăнне Хĕрлĕ Çар выставки валљи ÿкернĕ.

Халĕ батарейăна Чăваш республикинчен çĕнĕ боецсем килчĕç. Вĕсем сталинла декадăра лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Çĕнĕ командирсем

Иртнĕ çулта № полка килнĕ чăваш красноармейецсем халĕ кĕçĕн командирсем пулма вĕренсе тухрĕç.

Федоров, Коннов, Попов, Илларионов, Никитин йулташсем лайăх паллăсемпе вĕренсе тухрĕç.

Йев. Йени.

Осоавиахим организацисенче улшăну çук

Çĕмĕрле. („Чăваш Коммунĕ“ корр.) Çентябĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ районти Осоавиахим организацин конференцийĕ Осовиахим райсовечĕн ĕçне „начар“ тесе йышăнса, малашне ĕçе йусаса йарассишĕн тăрăшса ĕçлеме решени йышăнса хăварнăччĕ. Виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ унтанпа. Анчах ĕçре улшăну туни сисĕнмест. Пуçламĕш организацисем нимĕн те тумаççĕ. Хăшпĕр йалсенче ку таранчен те Осоавиахим организацисем çук.

Йалсенче ĕççем начар пынине райсоветра ĕçлекенсем хăйсен вăхăт пулманни çине йăвантарма пăхаççĕ. Апла пулсан хулари организацисенче ĕç туни курăнмала. Çук, кунта та ĕççем начар пыраççĕ.

Комбинатри Осоавиахим организацин председателĕ Дымов хăйне суйланăранпа та нимĕн те туман. Пĕтĕм ĕçе те унăн—пĕр хутчен пуçламĕш организацисен секретарĕсемпе канашлу туса иртерни çеç. Пайанхи куна комбинатра пĕр кружок та ĕçлемест. Хăма çуракан цехри пуçламĕш организаци саланса кайнă.

— Епĕр ĕçлемеле, анчах мĕн тумалине пĕлместпĕр. Пирĕнпе пухăнса калаçмаççĕ, вĕрентмеççĕ, план та çук,—тет стољарнăй цехри пуçламĕш организацин секретарĕ Кондратйев йулташ.

Кондратйев, рабочисем хушшинче, кам хăш кружокра вĕренме кăмăл пуррине çырса çÿрерĕ. Кĕске вăхăтрах „Ворошилов пек тĕл йеме вĕренмели“ кружока—15 çын, ПВХО кружокне—15, „ГТО“ нормисене пама хатĕрлекен кружока—13 çын çыранчĕç. Анчах руководителсем çук пирки ĕçĕ тытăнаймаççĕ, кăтартусем çук.

„Бољшевик“, „Труженик“ заводсенче та Осоавиахим организацисем тимлĕн ĕçлеме тытăнман. Член укçисене пуçтармаççĕ, пухусем туса ирттермеççĕ. Осоавиахим членĕсем пуçламĕш организацисен секретарĕсене палламаççĕ.

Хар. Лисин.

Артемйев камсене пулăшать?

Йăваç каскалакан промышленнăçри рабочисен сойузĕн облаçри комитет председателĕ пулса Артемйев ĕçлет. Вăл тăшманла елементсене вырăнти комитетсен аппарачĕсене вырнаçтарма пулăшса пырать. Рабочисем тăшманла елементсене хирĕç пуçарнă кĕрешÿве хĕсме тăрăшать.

Акă фактсем: 1936 çулта Артемйев фабком председателĕ пулса ĕçлеме йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă, партирен кăларнă Гордейева йарать. Гордейев государствă укçине 2.200 тенкĕ салатса йарать. Анчах Артемйев пулăшнипе 1000 тенкине куљтурăлă-массăлă ĕçсене туса пынăшăн, тесе ĕçукçине ÿстерсе витсе хураççĕ. 1937 çулта Гордейева ĕçрен кăларнă хыççăн Артемйев хушнипе фабком председателĕ пулса ĕçлеме Саприкона лартаççĕ. Саприко сăтăрла ĕççем тума тытăнать. Босљаков тăшманпа килĕшсе фабрикра ĕçлеме хăйĕн пичĕшне—шуркгвардейцăна чĕнсе илет. Ăна вĕсем чи лайăх хватер параççĕ.

Саприко фабком председателĕ пулса ĕçленипе пĕрлех аслă електромонтер пулса ĕçлесе рабочисем хушшинче килĕшÿсĕрлĕх кăларса пынă. Икĕ çул хушши ытла вăл общежитисене електричествă çути кĕртмесĕр тăнă. Моторсене сийенленĕ. Саприко Деткомиççин производствăлă пĕрлешÿвĕнче бухгалтер пулса шурă офицер Бакшайев тата комерчески директор пулса ĕлĕк пысăк суту-илÿ тунă çынăн ывăле. Плаксин „ĕçленине“ пĕлнĕ пулсан та, вĕсене хирĕç кĕрешÿ пуçарман. Çитменни çине вĕсене сăтăрла ĕççем тума тĕрлĕ майсемпе пулăшса пынă.

Саприко рабочисен умĕнче авторитет илессишĕн пухусенче тухса каласа Босљаковăн ĕçĕсене „критикленĕ“. Анчах пуху хупăннă хыççăнах Босљаков патне кайса малашнехи ĕççем çинчен канашланă.

Çÿлте асăннă тăшманла елементсене тата вĕсене пулăшакансене тăрă шыв çине кăларса судă памала тунă. Анчах Артемйев рабочисен пухувĕ йышăннă решенине хирĕç тăрса Саприкона пулăшма тытăнчĕ. Вăл пĕрлешÿлĕ пуху йышăннă решенине тĕрĕс мар тесе йышăнса, Деткомиççин Шупашкарти фабрикĕн дирекцине Саприкона халех ĕçе илме тата фабком председателĕн прависене пама хушнă. Ку çеç те мар-ха. Артемйев халăх тăшманне Щербакина тăрă шыв çине кăларнă чухне те хÿтĕлесе пычĕ. Питех те тĕлĕнтерет: мĕншĕн Артемйев тăшманла елементсене пулăшас ĕçе хăй çине илет-ши?

Зимин.

Хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пымасть

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Хăшпĕр йалсовечĕсем ПКС(б)П Чăваш Обкомĕн Пленумĕ укçа-тенкĕ çинчен йышăннă постановленине пурнăçлама тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕç. Мамалай йалсоветĕнче Пленум решенине сÿтсе йавнă хыççăн, финсекци членĕсем Михейев Архиппа Министров Григори укçа-тенкĕ планне ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă кун тĕлне пĕтĕмпех тултарассишĕн социалисăмла ăмăртува тухрĕç. Хăйсем пек ĕçлеме ытти финсекци членĕсене те социалисăмла ăмăртува чĕнчĕç. Ытти финçекци членĕсем вĕсен чĕнĕвне йышăнчĕç. Вĕсем халăх хушшинче укçа-тенкĕ планне тултарассишĕн ăнлантару ĕçне анлăн сарса йарса массăна хăйсем тавра пĕтĕçтерчĕç. Çапла ĕçлесе пынипе Мамалай йалсовечĕ суйлав кунĕ тĕлне государствă умĕнчи укçа-тенкĕ парăмне 100 проценчĕпех тултарчĕ.

Мăн Йăваш йалсовечĕ те ку ĕçе çÿлĕ вырăна лартнă. Кунта займ укçине парса татас плана декабĕрĕн 9-мĕшне 80 процент тултарнă. Уйрăмăнах финанс секци членĕсем Йефимов Петрпа Сорокин Иван хастарлăн ĕçлесе пыраççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕнче пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Анчах та кунашкал хастарлăн ĕçлесе пыраканнисем районра питех те сахал-ха. Хăшпĕр йалсоветсем Чăваш Обкомĕн Пленум решенисене йачĕшĕн кăна сÿтсе-йавнă. Айкăш йалсоветĕнче финанс активĕсен канашлувĕ туса, ĕçе вăйлатасси çинчен каласнă. Йалсовет председателĕ Семеновпа финанс секцин руководителĕ Кулайевски те хĕрсех каласнă, хăйсем çине обйазателствăсем те илнĕ. Анчах та укçа-тенкĕ пухасси йалсоветĕнче чăтма çук начар пырать. Самообложени укçине 9000 тенкĕ пухмала пулнă пулсан, 200 тенкĕ çеç пухнă. ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели займ укçине 6015 тенкĕ вырăнне 300 тенкĕне йахăн çеç пухнă. Тата ытти тÿлевсемпе те çавнашкалах кайра пыраççĕ. Укçа пама пынă çынсем укçа илекене кĕтсе кунĕкунĕпе лараççĕ. Йалсоветĕнче укçа илекен никам та çук. Йалсовет председателĕ Семенов укçа-тенкĕ планне тултарассишĕн кĕрешес вырăнне, кунĕ-кунĕпе ĕçкĕсенче çÿрет.

Пăртасри „Рапорт“ колхоз правленине темиçе хутчен те кăтартусем панă пулсан та пайанхи куна 1246 т. 24 пус тупăш налогĕ, 1768 т. 70 пус страховой укçи тÿлесе татман. Масса хушшинче нимĕнле ăнлантарулă ĕç те туса пымаççĕ. Иртеменкассинчи „Победа“ колхоз председателĕ Волков хăй те укçа-тенкĕ парăмне пĕр пус та паман. Кăкшăм йалсоветĕнчи работниксем ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн IV пленумĕ укçа-тенкĕ планне вăхăтра тултарасси пирки йышăннă постановлени çинчен те пĕлмеççĕ. Финанс секци руководителĕ Алексейев хăйĕн членĕсен шутне манса кайнă.

Районри финанс пайĕ ку çитменлĕхсене пĕлсе тăрать пулин те хăйне тивĕç ĕçе туса пымасть.

Ст. Улангай.

Шкула куљтурлăх кирлĕ

— Ну, шăхлич, чуптар!

— Шăхли-ич?.. Ун пек каламаççĕ-хаљ çынна.

— Мĕнле калаççĕ?

— Йулташ тесе чĕнеççĕ.

— Йулташ, шкула кайатăн пуљ вĕт есĕ?

— Çиччĕмĕш çул вĕренетĕп, çичĕ отличнă, посредственнăй çук, а есĕ... татах шăхлич тетĕн.

— Апла есĕ профессор!

— Кулан пулсан, смотри урапа çинчен ÿкерсе хăваратăп...

Йамшăк вырăнне пулса, çитес йалсоветне леçекен Аврам йатлă ача ман çине çиленнĕ пек пулчĕ

— Ахаљ кулса каларăм, Аврам, молодец есĕ, совет шкулĕнче вĕренекен ачасем пурте сан пек хăйулă пулмала.

— Çапла çавă, ĕлĕкхи мар халĕ.

— Апла пулсан çĕлĕкна хыв-ха.

— Мĕн тума? Турра ĕненместĕп вĕт епĕ.

— Ахалех, хыв-ха.

Ача çул çине чиксе тухнă кĕсйинчи икĕ шушкине тытса пыракан хăрах аллине йĕрипен кăларчĕ те, çĕлĕкне хывса кăтартрĕ.

— Ой, çÿçне касманçке есĕ!

— Сивĕ—кассан...

Аврам чĕрнисене касман, аллисем хура, мунча кĕни нумай пулать. Миçе кунтан кĕмеле мунча? Урайне миçе кунтан çумала? Шкул ачисен мĕншĕн уйрăм çывăрмала? Мĕншĕн чĕрнене касмала?

Çак ыйтусем çине ача тĕп-тĕрĕс ответ параймасть, микроп çинчен пĕлкелет пулсан та. Анчах айăплă-и уншăн ача? Пĕре те çук. Епĕ çитсе курнă Турхан районĕнчи шкулсенче пуринче те ачасене куљтурлă, сывлăхлă пурăнма вĕрентес ĕç начар тăрать. Ак вăл ача вĕренекен Бахтгиљдино шкулĕнче урайне типĕ шăпăрпа тусан кăларса шăлаççĕ, Кивĕ Ейпеçри ачасем тумтирĕсене класрах хывса хураççĕ.

Нăрваш Шăхалĕнчен шкул ачисем хушшинче трахомлисем пур. Районри пĕр шкулра та ачасен сывлăхĕсене йĕркелĕ пăхса тăмаççĕ.

Мĕн çинчен калаççĕ ĕнтĕ çак фактсем? Шкулсенче вĕрентес ĕç лайăхлансах пырать, ачасем тăрăшаççĕ, хăйулă çынсем пулаççĕ. Анчах куљтурă... Куљтурă нумай шкулсене çитмест, çук вăл. Ачасем лайăххине те, усаллине те шкултан курса вĕренеççĕ пулсан, куљтурă ыйтуне вырăна лартасси шкулсен ĕçĕ мар-ши вара? Вăхăт, тахçанах вăхăт ачасене куљтурлă пурăнма вĕрентме. Учителсен анчах мар, ыттисен те хытăрах çаврăнса пăхмала шкул çине.

К. Пайраш.

Трахпунктсенче

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Çавалкас Маратри трахработник Александров трахом чирне пĕтерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлет.

Трахом пунктне уçаччен йалта трахомпа чирлисем 225 çын пулнă. Вĕсенчен: пĕрремĕш стадипе—81 çын, II стадипе—28, III стадипе—105, IV стадипе—8 çын. Трахработник Александров йулташ тимлĕн емелленипе пайанхи куна трахомăн йерекен формине (1-мĕшпе II-мĕш стадисене) пĕтернĕ. 31 çын трахом чирĕнчен пĕтĕмпех сывалнă.

Александров трахработник колхозниксемпе йединоличниксене тасалăха вĕрентес йĕнĕпе уйрăмах тăрăшаса ĕçлет. Йалти çынсем мĕнле пурăннине пĕлсе тăма вăл çинесинех килĕрен пăхса çÿрет.

Шăхаљ, Чăраш Шĕнер йалĕсенче трахом чирĕн йерекен формине тĕппех пĕтернĕ.

Ст. Филиппов.

Тăвай районĕнче хускалмаççĕ

Тăвай районĕнче укçа-тенкĕ пухас ĕçе йĕркелесе çитерейменха. Нумай йалсовечĕсенче финанс секцисем ĕçлемеççĕ. Финанс планĕ хăй тĕллĕн пурнăçа кĕрсе пырасси çине шанса ларакансем те сахал мар. Нумай йалсовечĕсем ПСК(б) Партин Чăваш Обкомĕн IV-мĕш пленумĕн решенине пĕтĕмпех ăнланса илсе хăйсене кирлĕ, çителĕклĕ вывăд тумаççĕ. „Райĕçтăвкомсене, йалсоветсене, çавăн пекех тата парти организацийĕсене пурне те халех финанс ĕçне хăпартма, ĕçе кирлĕ пек организацилесе, ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕ тĕлне—декабĕрĕн 12-мĕш тĕлне—пирĕн республикă пур тÿлевсем йĕнĕпе те çултăлăк финпланне срукчен тултарнине çитмеле тума хушать“, тенĕ пленум решенинче. ПСК(б) Парти Обкомĕн пленум решенине районра пурнăça кĕртеймерĕç. Налог пухассипе чи малта пыракан йалсемте: Çĕнĕ Пуйанкасси—71,4 проц., Йенĕш Нăрваш—69,7 проц., Çĕнĕ Çырма—46,9 процент çеç тултарнă. Çултăлăк планне çурри те тултарман йалсовечĕсем те пур. Акă, Елпуç—44,6 проц., Вырăс Нăрваш—41,8 проц., Тăрмăш—40,5 процент анчах тултарнă.

Уйрăмах „ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели займ“ укçине пухасси чăтма çук йапах пырать. Акă кайра пыракан йалсовечĕсем: Йенĕш Нăрваш 38,8 проц., Тăвай 35 проц., Тушкил 29,5 проц., Сахатпуçĕ—27 проц. кăна пухнă. Займ укçине Амалăх йалсовечĕ 6,2 проц., Çĕнĕ Шипуç 7,7 проц., Çалпуç—8 процент, Кĕршĕ 10,1 проц., Çĕнĕ Çырма—10,23 процент çеç пухнă. Пĕтĕм районĕпе „ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели займ“ укçине пухас плана 30 процента йахăн тултарнă. Массăлă тÿлевсем тăрăх та, халăхăн ирĕклĕ укçа-тенкине пухас йĕнĕпе те план пурнăça кĕрсе пымасть.

Йалсоветсен финанс секци членĕсем колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче нимĕнле массăлă-ăнлантарулă ĕç те туса пымаççĕ. Малашне финанс йĕнĕпе кайа йулнине пĕтермеле. Укçа-тенкĕ пухас ĕçе пурнăça кĕртессишĕн бољшевикла хастарлăхпа кĕрешмеле.

К. Лазарев.

Шупашкарти автовакзал

Шупашкар хулинчи автовакзалта автобуспа ларса кайма пĕр кун малтан билет илме пулать. Машинăсем расписани тăрăх йĕркелĕ çÿреççĕ. Кунта пассажирсем кашни кунах питĕ нумай.

Çул çине кайакан çынсем валљи кĕтсе лармали зала пукансем, сĕтелсем çителĕклĕ лартнă. Сĕтелсем çинче хаçат-журналсем, шашка, шахмăтсем пур. Радио кĕрлет.

Çĕнĕ çул валљи автовакзал кĕтсе ларакан пассажирсене вулама 4 тĕслĕ хаçат 6 екземпљар, „Физкультура и спорт“, „Огонек“ журналсем çырăннă.

Пĕлтĕрсем ачалă пассажирсем валљи йатарласа тунă кĕтсе лармали пÿлĕм пурччĕ. Кăçал вăл пÿлĕме пĕтерсе лартнă. Çакна кам тата мĕнљĕн çапла тунине пачах ăнланма çук. Автовокзал çумĕнче столовăй пекки пур. Анчах столовăй начар ĕçлет, çимелисем йалангах пĕр тĕслĕ, хаклă. Унта тата час-часах ÿсĕр çынсем сĕтĕрĕнсе ашкăнса ларнине курма пулать.

Чĕрĕ çынсемшĕн ытларах тăрăшмалли кирлĕ. Столицăри автовокзала кăтартулă йĕркелемеле.

В. А.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

★ „Колхоза йапăхтараççĕ“ йатлă заметкăра Кириллов колхозник Канаш районĕнчи Каганович йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Советский колхозра сăтăрла ĕççем туни, колхозниксем хушшинче ĕç дисциплинине йапăхтарни, государствăна йурийĕх савăслă тырă пани, ĕçкунĕсене вăхăтра çырманни, правлени составĕнче колхоза сăтăр тăвас шутпа ĕçлеçе пурăнакан çынсем ĕçлени çинчен те çырнăччĕ.

Заметкăна ПСК(б)П Канаш райкомĕнчен вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслÿ результатне парти райкомĕ бÿровĕн заседанинче сÿтсе-йавнă. Райком бÿровĕ Советскине парти членĕнчен кăларса суда панă.

★ Йелчĕк районĕнчи „Осоавиахим“ колхозра йĕркесĕрлĕхсем нумай. Быков Е. пĕр лаша, бригадир Дозоров тепĕр лаша вĕлернĕ. Дозоров колхозниксене хĕнет, кирлĕ ĕçе кайма колхозниксене лаша памасть. Ĕçкунĕсене вăхăтра çырмасть, йалан ÿсĕр çÿрет. Йалхуçалăх машинĕсем ăçта килчĕ унта сапаланса выртаççĕ, тесе çырнăччĕ Горшков колхозник.

ПСК(б)П Йелчĕк райкомĕн секретарĕ Макаров заметкă пирки çапла пĕлтерчĕ: „заметкăна райком инструкторĕ вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Заметкăра çырнă фактсем пĕтĕмĕшпех тĕрĕс. Заметкăна колхозниксен пухувĕнче сÿтсе-йавнă хыççăн, Быковпа Дозоров ĕçĕсене следстви органне пана пулнă. Халĕ следстви пĕтнĕ, вăл ĕçе халăх сучĕ пăхса тухмала“.

★ „Абросимов почтаљйон ĕслемесĕрех укçа илесшĕн“ йатлă заметкăра Е. йалкор Патăрйел районĕнчи „Хĕрлĕ йалав“ колхоза ĕçлекен Абросимов почтаљйон хаçат-журналсене подписчиксене патне вăхăтра çитерменни, подписчиксен укçисене хăй çумне тыни тата çурçисене çинчи маркăсене хăпатса хăйне валли илсе йулнисем çинчен çырнăччĕ.

Заметкăна Патăрйел районĕнчи çыхăну уйрăмĕнчен вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Е. Йалкор çырнă фактсем тĕрĕс пулнă. Халĕ Абросимова ĕçрен кăларса суда панă.

★ „ХАЛĂХ ТАШМАНЕ ХĂЙ ĔÇНЕХ ТĂВАТ“ йатлă заметкăра Шумилов йалкор Ишлей районĕнчи „Çĕнĕ Марка“ колхоз председателĕ Васильев Т. халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытни, колхоз пурлăхне йăкăнтарни, учот ĕçне йăкăнтарни тата ыттисем çинчен те çырнăччĕ.

Заметка пирки ПСК(б)П Ишлей райкомĕн секретарĕ Федоров йулташ çапла пĕлтерет: „Заметка тĕрĕс. Колхоз председателне Васильева ĕçрен кăларса суда панă“.

★ „Колхоз пурлăхне çаратаççĕ“ йатлă заметкăра Трак районĕнчи „Хĕрлĕ çалтăр“ колхоз завхозĕ пулса ĕçлекен Филипповăн 54 пăт тырă тухманни, унăн айăпĕпе колхозан 623 пăт çĕрулми çĕрни тата ытти çинчен те çырнăччĕ Степанов йалкор.

Заметкăна „Чăваш Коммунĕ“ редакци тĕрĕслеме Трак районĕнчи прокурор патне йанă. Заметка пирки прокурор çапла пĕлтерчĕ: „Заметкăра çырнисем тĕрĕс. Филиппова айăпласа суда панă. Колхоз председателĕ Никитин çинчен колхозниксен пухувĕнче сÿтсе-йавма Трак районĕн Çĕрĕç пайне хушнă“.

Санпропускник

Шупашкар хулинчи санпропускник кăçалхи ийулĕн 20-мĕшĕнче ĕçлеме тытăннă. Йалтан йе тата ытти çĕртен Шупашкара килекен çынсем Хресчен çуртне йе Гостиницăна хватере кĕриччен кунта çăвăнса тасалса тухаççĕ.

Алăкран кĕрсенех парикмахерски, унтан кĕпе тумтирсене хывса тĕрлĕрен паразитсенчен тасатма вĕри камерăна памала. Кайран çур сехет хушши душ айне тăрса çăвăнмала. Мĕн пурĕ 10 душ тунă.

Шкул общежитийĕсенче выртсатăмали вырăн таврашĕсене те кунта илсе килсе дезинфекцилеççĕ.

Сикекен чирсенчен (скарлатинă, дезинтери т. ыт.) тасалма вĕри пăспа пĕсертмели камерă ĕçлет. Ку камерăра çав чирсемпе чирленĕ çын тумтирне дезинфекцилеççĕ. Хăш чухне чирленĕ çыннăн килне кайса дезинфекци тăваççĕ.

Йанварĕн 1-мĕшĕнче Шупашкарта дезинфекци станцийĕ ĕçлеме тытăнать. Ленин урамĕнче дезостанци валљи йатарласа пысăк чулçурт туса лартнă. Кунта прачечнăй та пулать.

Ĕнесĕр колхозниксем çук

ÇĔРПУ. „Камай“ колхоз кăçал государствăран 500 тенкĕ кивçен илчĕ. Çак укçапа колхоз правленийĕ ĕнесĕр колхозниксене 5 пăру туйанса пачĕ. Халь колхозра ĕнесĕр колхозниксем пĕртте çук.

Ф. Палунин.

Ответлă редактăр заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Извещение

Чебоксарский Горфинотдел приглашает **всех государственных, торговых, кооперативных, промысловых, коммунальных и прочих предприятий** г. Чебоксар, являющихся плательщиками налога с оборота, налога с нетоварных операций, налога с кино, бюджетных наценок, бюджетных разниц, отчислений от прибылей и подоходного налога **зарегистрироваться на 1938 год в Чебоксарском Горфинотделе до 25 декабря 1937 года.** Формы регистрационных карточек должны получить в Горфо.

За уклонение от налоговой регистрации виновные будут привлечены к ответственности.

ГОРФО.

Тимĕрççене тата хуçалăхсенче усă курма
шиналăх тăрăх тимĕр
СУТЛĂХ ПУР

30—35 тоннă таран пулать

Çак адрĕспе ыйтмала: Шупашкар хули, Красноармейскайа урамĕ № 5. Телефон № 3—62 „Спотара“ Чăваш кантурĕ.

Канашри тата Çĕмĕрлери „Спотара“ уприймĕсенче ыйтса пĕлме тата тимĕр мĕнлине курма пулать.

„СПОТАРА“.

2—2

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита №955 ... Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж ...